Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 29 ЫТЛАРИКУН 274(5087) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухаť. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0 — 67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, партн пурнăç пайĕн—7—97, ялхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Ĕçе тунине сталинла тĕрĕслессишĕн

Пирĕн партин Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕ организацилĕ ыйтусене пит пысăк вырăна хураť. Ку пуринпĕн те паллă. Ленин—Сталин партийĕ социалисăм строительствин пур участкисенче те пит пысăк ĕçсем туса иртерет. Пирĕн партин тĕп çулйĕрĕ тĕрĕссине социалисăмлă обшчĕствă тăвассишĕн нумай çулсем хушши кĕрешнĕ чаплă опытсем çирĕплетеççĕ. Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисем хăйсен тăван бољшевикла парти пуçарнă пур ĕçсене те пурнăça кĕртессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ, вĕсем Ленин—Сталин партийĕ кăтартса панă çулпа пырса социалисăм строительствинче çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыраççĕ.

Пирĕн партин Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ партин кашни организацине, парторганизацин кашни руководительне социалисăм строительствин пур участкисенчи ĕçсене те оперативлă, чĕррĕн, конкретлă йертсе пыма, йышăннă решенисене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăça кĕртмеле тума хушаççĕ.

Парти, совет, хуçалăх ĕçĕсене йертсе пырас ĕçре тĕп вырăнта тăракан условисенчен пĕри — çынсене суйласа илесси, ĕçе мĕнле тунине бољшевикла тĕрĕслесси пулаť. Çакна тумасан, темĕн пек лайăх решенисем те хут çинче çеç йулаççĕ, тума палăртнă ĕçсем пурнăçланмаççĕ. Решени йышăннипех çĕнтерӳ пулаť тесе, шутлани йăнăш. Пурнăçра нихăçан та решени йышăнни çеç çĕнтерӳ туни пулман. Çĕнтерӳ нихăçан та хăй тĕллĕн пулмаť. Ăна йаланах вăйхала хурса кĕрешнипе тумалла.

Партин 17-мĕш сйесĕнче тунă докладĕнче Сталин йулташ çапла калорĕ: „Тĕрĕс çулйĕр кăтартса панă хыççăн, ыйтăва мĕнле тĕрĕс татса памалине пĕлнĕ хыççăн—ĕçе ăнăçлăн тăвасси организацилĕ ĕçсенчен, парти çулйĕрне пурнăça кĕртессишĕн кĕрешес ĕçе мĕнле организацилениччен, кирлĕ çынсем тупса, вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухниччен, йертсе пыракан оргăнсен решенийĕсене пурнăça кĕртнине тĕрĕслесе тăниччен килет".

Партин уйрăм пуçламĕш организацисем, райкомсем пур чухне те Сталин йулташ çапла кăтартса панă тăрăх ĕçлесе пыма пĕлмеççĕ-ха. Вĕсем йышăннă решенисене организацилĕ ĕçпе çирĕплетмеççĕ. Çапла, партин отчотпа суйлав пухăвĕсенче — пуçламĕш организацисенчи тата районсенчи пухусенче, хулари конференцисенче—парти комитечĕсен тата вĕсен руководителĕсен ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене бољшевикла критиклесе, коммунистсем партилĕ-политикăлă тата хуçалăхлă ĕçсене лайăхлатма хăвлă сĕнӳсем парса хăварчĕç. Партин йертсе пыракан оргăнĕсен отчотпа суйлав кампанийĕ пулнăранпа çурçул. партин облаçри 19-мĕш конференци пулнăранпа икĕ уйăх иртрĕ. Парти Тĕпкомĕн кăтартăвĕсем, партконференцисемпе пухусен решенийĕсем тăрăх ĕçлесе, партин Чăваш республикĕнчи организацийĕсем партилĕ-политикăлă ĕçе, çавăн пекех хуçалăхлă ĕçсене лайăхлатма пуçларĕç. Парти организацисем халăхпа тачă çыхăну тытассине тата çирĕплетрĕç, револјуцилĕ сыхăлăха ӳстерчĕç. Çĕнĕ кадрсене йертсе пырас ĕçсене чылай хутшăнтарчĕç т. ыт. те.

Анчах çапла пулин те, ку таранччен тунă ĕçсем малтанхи утăмсем çеç-ха. Пирĕн хăйсем йышăннă решенисене пурнăça кĕртесси çинчен пачах манса кайнă парторганизацисем сахал мар. Сăмахран, Канаш райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци отчотпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем панă сĕнӳсене пурнăça кĕртме мар, пуху протоколне те йĕркелемен. Шупашкарти „Водосвет" сумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем панă ыра сĕнӳсене пĕрине те пурнăça кĕртмен. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче йышăннă решенисене пурнăça кĕртесси Чăвашсойуз (Шупашкар хули), Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацисенче те çителĕксĕр пыраť.

Отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене çителĕксĕр пурнăçланин сăлтавĕ мĕнре-ха? Йышăннă решенисене организацилĕ ĕçпе çирĕплетменнинче, вĕсене пурнăça кĕртнине куллен тĕрĕслемениниче. Организацилĕ ĕç, бољшевикла контрољ çук çĕрте йышăннă решенисем йаланах хут çинче йулаççĕ. Партин Шупашкар хула комитечĕ, Канаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем те отчотпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем парткомсемпе парторгсене питĕ кирлĕ сĕнӳсем парса хăварнине пĕлсе тăнă. Анчах пуçламĕш организацисенче йышăннă решенисене пурнăçласси мĕнле пынине куллен тĕрĕслемен. Вĕсем ПСК(б)П Тĕпкомĕ отчотпа суйлав кампани вăхăтĕнче партком тата парторг ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă организацисене хула комитечĕсен, райкомсен тĕрĕслемеле, вĕсене партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăх йĕркелеме пулăшмала тесе кăтартса панине çине тăрса пурнăça кĕртни çук-ха.

Партин Канаш тата Петĕрне райкомĕсем хăйсен районĕсем хуçалăх ĕçĕсем йенĕпе хăйа йулнине халех пĕтермеле тесе сахал мар решенисем йышăннă. Çак решенисем халĕ те пурнăça кĕмеççĕ. Канашпа Петĕрне районĕсем государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас тĕлĕшпе республикре кайра пыраççĕ. Çакăншăн райкомсем хăйсем айăплă, вĕсем пуçламĕш парторганизацисем хуçалăх ыйтăвĕсемпе мĕнле ĕçленине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмаççĕ, кирлĕ чухне тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарса пымаççĕ.

Йышăннă решенисене тĕрĕслесси—партилĕ ĕçре питех те пысăк вырăнта тăраť. Тĕрĕслӳ парторганизаци руководителĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене мĕнле пурнăça кĕртнине, ăна мĕнле пулăшу кирлине палăртма пулăшаť.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ, Сталин йулташ пирĕн работниксене вĕсен сăмахĕсене кура мар, вĕсен ĕçĕсен резуљтачĕсене кура тĕрĕслеме вĕрентеççĕ. Кайа йулакан организацисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрсан, руководителĕсен ответлăхне ӳстерсен, ĕçпе пулăшса пырсан, вĕсене малта пыракан организацисен ретне кăларма пулаť.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май партилĕ пропагандăна йĕркелесси çинчен" партин Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени партин кашни организаци умне питĕ пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак постановлени коммунистсене, комсомолĕçсене, совет интеллигенцине бољшевисăмпа хĕçпăшаллантармалли конкретлă ĕç программи пачĕ.

„Партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕн итогĕ май тумалли хăшпĕр ĕçсем çинчен" ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленипе отчотпа суйлав пухăвĕсен решенисене, коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăça мĕнле кĕртнине райкомсен, хула комитечĕсен тăтăшах тĕрĕслесе пыма, çав организацисене партилĕ-политикăлă тата хуçалăхлă ĕçсене вăйлатма кирлĕ пулăшу пама хушаť. Парти Тĕпкомĕн çак постановленине пурнăça кĕртни, ĕçе тунине тăтăшах тĕрĕслени, парти конференцисемпе пухăвĕсен решенисене, коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăça кĕртнине бољшевикла тĕрĕслени партин кашни организацине çирĕплетет, партилĕ-политикăлă ĕçсене вăйлатаť.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче Центр Китайра, Иочжоуран кăнтăр йенне 11 километрта тата Синцзйан йуханшывĕн çурçĕр çыранĕ çинче Йапони çарĕсем китайĕçсен позицийĕсем çине наступлени тума пуçланă.

Хубей провинцин хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем йапонĕçсене Лоťаньран (Ханькоуран çурçĕр-хĕвел тухăç йенче 100 километрта) хĕссе кăларнă.

Кăнтăр Китайра Кантон районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Йапонĕçсем унта çĕнĕ пысăк вăйсем илсе пыраççĕ. Йулашки кунсенче çапăçусем Англин Гонконг йатлă колонийĕн чиккисем патнелех куçса пынă.

Çурçĕр Китайра Шаньси провинцине йапонĕçсем, партизансен центрĕсем çине çĕнĕрен (виççĕмĕш хут) наступлени тума, Китай çарĕсен позицийĕсем çине наступлени тума пысăк вăйсем пухаççĕ.

Фупинран (Хебей провинци) кăнтăр-хĕвелтухăç йенче çапăçусем çĕнĕрен пуçланнă.

(ТАСС).

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсемпе выљав укçисем тӳлеççĕ

Нойабĕрĕн 16—18-мĕш кунĕсенче Кабардино-Болгар АСС Республикĕнче, Нальчик хулинче, Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсен пур 34 разрйад тăрăх та выљав пулса иртнĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕнче выљав таблицисем килсенех районсенчи, хуласенчи тата йалсенчи перекет кассисенче выљав укçине тӳлеме тытăнчĕç. Нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче кăнтăрла тĕлне Шупашкарти Тĕп перекет кассинче 3 çынна 180 тенкĕ выљав укçи тӳлерĕç. Вĕсенчен Чебторгăн пĕрле апатланас ĕçĕн уйрăмĕнче ĕçлекен Калмыкова йулташ 3 тенкĕлĕх билетпа 100 тенкĕ выљаса илнĕ.

Германири йеврейсене хирĕç тăвакан погромсем совет интеллигенцине çиллентерсе тарăхтараççĕ

Нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Мускавра совет интеллигенцин икĕ пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ. митинга, фашисла Германире йеврейсене хирĕç погромсем тунă май, ССР Сойузĕнчи совет писателĕсен сойузĕн правленийĕпе совет архитекторĕсен сойузĕн правленийĕ организациленĕ.

Митинга писатель А. Н. Толстой уçнă. вăл вăйлă та уçăмлă сăмах тухса каланă.

Унтан Пĕтĕм Сойузри архитектурă академин президенчĕ В. А. Веснин йулташ сăмах илнĕ.

— Фашисла йунлă террорăн тискер хăрушлăхĕ умĕнче патша самодержавин тĕттĕм çулĕсем, вăл йеврейсене хирĕç тунă погромсем, варфоломейла каçсен хăрушлăхĕсем, вăтам ĕмĕрти инквизици те тĕксĕмленет.

РСФСР Халăх артисчĕ С. М. Михоелс хумханулă сăмах тухса каланă.

— Вĕлересси, çаратасси, çунтарасси, çĕмĕресси, пусмăрласа мăшкăласси—ку вăл фашисăмăн природи, унăн живодерла миссийĕ,—тет вăл.

— Анчах фашисăма тĕп тăвĕç. Йеврейсене хирĕç тăвакан погромсем вăл—фашисăм вилес умĕн туртăшни.

— Пуç пулса тăракан классем,—тет ССРС Халăх артисчĕ Н. П. Хмељов,—религилĕ тата нацилĕ лозунгсен йалавне çĕклесе çынсене йунлăн пĕтернĕ фактсене истори нумай пĕлет. Анчах хальхи вăхăтра Германире пулса иртекен тĕлĕнмеле тискер ĕçсем умĕнче вăл фактсем те тĕксĕмленеççĕ.

Пирĕн йурату, пирĕн кăмăлсем фашисла пусмăртан асап куракансем йенче.

— Пирĕн çĕршыв,— тет вăл малала,— расăлă теорисемпе нацилĕ пусмăран хăрушлăхĕсенчен ĕмĕрлĕхех хăтăлнă. Епĕр пĕтĕм тĕнчене класлă, религилĕ тата нацилĕ пусмăрлăхран ирĕке кăларассишĕн кĕрешетпĕр. Епĕр етемлĕхе мирлĕ пурнăç тата хаваслăх кӳретпĕр; фашистсем тĕнчене вăрçă хăрушлăхĕсем тата йунлă погромсем кӳреççĕ.

Митингра çавăн пекех РСФСР Халăх артисчĕ Ханайĕв, РСФСР Халăх артисчĕ Гољденвейзĕр, писательсем Корнейчук тата Собелĕв, искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ художник Герасимăв, искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ кинорежиççор Александрăв тухса каланă.

Мускаври интеллигенци представителĕсем хăйсен пĕр саслăн йышăннă резољуцийĕнче фашистсем йеврей халăхĕ тĕлĕшпе етемле мар тискер ĕçсем тунă пирки, вĕсене пусмăрласа мăшкăланă пирки хăйсем хайаррăн çиллене тарăхни çинчен калаççĕ.

Çав кунах тата Ленин хулинче, совет Украинин столицинче—Кийĕвра интеллигенци представителĕсен нумай çынлă митингĕсем пулса иртнĕ.

Вăл митингсенче академиксем, композиторсем, артистсем, архитекторсем, художниксем тата совет интеллигенцин ытти представителĕсем те пулнă. Митингсенче пĕр саслă йышăннă резољуцисенче фашисла мракобессен тĕлĕнмеле тискер преступленийĕсем пирки тарăхăн çиллене тарăхни çинчен каланă.

(ТАСС).

Германире фашисăма хирĕçле йухăм ӳссе пыраť

Фашистсем йеврейсене тискеррĕн погромсем тунипе çиленсе тарăхнă Германи халăхĕ хушшинче фашисăма хирĕçле йухăм сарăлсах пыраť. Йулашки вăхăтра фашиссене хирĕçле пытанса ĕçлекен организацисен активлăхĕ чылайах ӳснĕ.

Çав тери хайар террор пулсан та, Германире фашисăма хирĕçле йачейкăсем организацилеме чĕнекен вăрттăн кăларнă листовкăсемпе хаçатсем нумай сарăлаççĕ.

Йулашки вăхăтра фашисла партисен чылай членĕсене арĕсленĕ, вĕсене фашиссене хирĕçле вăрттăн ĕçлекен организацисене укçа тенкĕ панă тата ĕçре пулăшнă тесе айăплаççĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршывсенчи пичет Пољшăпа Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем çинчен

Йут çĕршывсенчи пичет Литвинăв йулташпа Пољшăн Мускаври посолĕ Гржибовский хушшинче пулнă калаçусен резуљтачĕсем çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пурте пĕлеççĕ, вăл калаçусенче Совет Сойузĕпе Пољшă хушшинчи хутшăнусем пирки тата вĕсене лайăхлатмалли ĕçсем пирки сăмах хускатнă. Уйрăмăн илсен, пулса иртнĕ калаçусенче ССР Сойузĕпе Пољшă хушшинчи хальхи вăхăтри догăвăрсене, çав шутрах пĕр-пĕрин çине тапăнмала марри çинчен тунă догăвăра та, çаплипех ĕçре хăварма, пĕр-пĕрин хушшинчи суту-илӳ оборочĕсене анлăлатма тата йулашки вăхăтра сиксе тухнă чикĕри инцидентсене пĕтерме палăртса хунă.

Францири „Фигаро" хаçат çак калаçусем çинчен пĕлтернине: „Совет Сойузĕпе Пољшă хушшинчи хутшăнусем лайăхланса пыраççĕ" текен заголовăкпа пичетлесе кăларнă. Паллă журналистка Табуи „Евр" хаçатра çапла çыраť: „Германи çывăх вăхăтрах Данциг коридорĕ çинчен ыйту лартассине поляксем ăнланмасăр тăма пултараймаççĕ. Мӳнхĕнри килĕшӳ хыççăн Франци хăйĕн хĕвелтухăçĕнчи сойузникĕсенчен ытларан ытларах уйăрăлса пыраť. Совет Сойузĕпе пĕр-пĕрин çине тапăнмала марри çинчен тунă хăйĕн догăвăрне çĕнĕрен малала тăсса, Пољшă хăйĕн хăрушăсăрлăхне гарантилеме тăрăшаť, тесе шутлаççĕ",

„Ентрансижан" хаçат, Литвинăв йулташпа Гржибовский хушшинчи калаçусем çинчен пĕлтерни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăракан документ пулса тăраť, тесе шутлаť. Германи Йевропăн хĕвелтухăç пайĕнче киревсĕр ĕçсем тунă пирки Пољшă шикленнине паллă туса, хаçат çакна кăтартса параť: „Паллах, çак сăлтавпа ĕнтĕ Пољшă правительстви хăйĕн Мускаври посолне Литвинăвпа калаçу пуçлама приказ панă, икĕ государствă—Совет Сойузĕпе Пољшă—кирлĕ пулсан тăшмана хирĕç пĕр-пĕринпе килĕшсе тухмала пултăр тесе шутланă" — тет.

Пољшăн телеграф агентстви Литвинăв йулташпа Пољшăн Мускаври посолĕ г. Гржибовский хушшинче пулнă калаçусен итогĕсем çинчен пĕлтернине нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Пољшăри пĕтĕм хаçатсем курăнмала вырăнта, пысăк заголовăксем парса пичетлесе кăларнă. Хаçатсем вăл пĕлтерĕве: „Пољшăпа Совет Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем тĕреклĕ пулнине çирĕплетни", „Пĕр-пĕрин çине тапăнмала марри çинчен тунă пакт—Пољшăпа ССР Сойузĕ хушшинчи мирлĕ хутшăнусен çителĕклĕ çирĕп гарантийĕ", „Пĕр-пĕрин çине тапăнмала марри çинчен тунă догăвăр Пољшăпа ССР Сойузĕ хушшинчи хутшăнусем çĕмĕрĕлес çуккине гарантилет" текен пысăк заголовăксемпе пичетлесе кăларнă.

(ТАСС).

Мускаври метрополитенăн виççĕмĕш черетри строительствинче. Покровски радиусăн № 1—2 шахтинче. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: откатчик Ф. И. Дружин грунт илсе тухаť.

Л. Великжанин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

ПСÇЛКС Мускав организаци активĕн пухăвĕ

Нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче ПСÇЛКС Мускав организаци активĕн пухăвĕ уçăлнă. Пуху ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе йаваť. ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн VII-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен ПСÇЛКС Тĕп Комитет çекретарĕ Михайлăв йулташ доклад туса панă. Михайлăв йулташ хăйĕн докладĕнче ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн нумай пулмаť пулса иртнĕ пленумĕн ĕçĕсем тата пленум йышăннă решенисем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Доклад тăрăх прените пуçланнă. Тухса калакансем ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн VII-мĕш пленум решенийĕсене пурте пĕр кăмăлпа ырласа саламланă.

Пренисенче тухса калакансем пурте, политикă йенĕпе панкрута тухнă, халăх тăшманĕсене пытарса усранă çынсене комсомолăн йертсе пырас ĕçĕсенчен кăларни комсомол ретне хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсемпе хăйаррăн кĕрешсе пырас ĕçе анлăн сарса йама пулăшĕ, тесе кăтартса панă.

Тухса калакан йулташсем, чылайĕшĕ ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн ĕçĕнчи, çавăн пекех, ПСÇЛКС Мускав облаç тата хула комитечĕсен, вĕсен руководителĕсен, уйрăм работникĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртса хытă критикленĕ.

Актив пухăвĕ хупăнман-ха.

(ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ пĕтнĕ,

Ботвинник виççĕмĕш вырăнта

Тĕнчери чи вăйлă гроссмейстĕрсем хушшинчи матч-турнир пĕтнĕ. Турнир 22 кун хушши пынă.

Йулашки—вунтăваттăмĕш—тур нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Амстердамра пулса иртнĕ. Пысăк хастарлăхпа выљаса, Ейве Капабланкăна çĕнтернĕ. Турнир лидерĕсем Керес па Файн пĕрне-пĕри çĕнтереймен. Альохин шурă фигурăсемпе Ботвинника хирĕç выљанă. Вĕсем пĕрне-пĕри çĕнтереймен. Çавăн пекех Флорпа Решевский те пĕрне-пĕри парăнман.

Çапла вара, турнирăн татăклă резуљтачĕсем çакăн пек: пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнта Керес (Естони) тата Файн (Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем), вĕсем 8-шар очко çурă пухнă, виççĕмĕш вырăнта—Ботвинник (ССРС)—унăн 7 очко çурă, тăваттăмĕш, пиллĕкĕмĕш тата улттăмĕш вырăнсене Альохин (Франци), Ейве (Голланди) тата Решевский (Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем) йышăннă—вĕсен çиччĕшер очко. Çиччĕмĕш вырăнта—Капабланкă (Куба), унăн ултă очко, йулашки вырăнта—Флор (Чехословаки)—унăн 4 очко çурă.

(ТАСС).

Врачсем валљи консуљтаци бӳровĕ

1935 çултан вара Мускавра врачсен квалификацине ӳстермелли тĕп институчĕн консуљтаци бӳровĕ ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче бӳро икĕ пин çурă çынран илнĕ пилĕк пин ыйту çине ответ панă.

Вĕсенче çаксем çинчен сăмах пынă: çын йăвăр чирленĕ тĕлсенче мĕнле чир иккенне пĕлсе çынна тĕрĕс сыватасси çинчен çĕнĕ фармацевтичĕски препаратсемпе уса курасси çинчен, лабораторисене мĕнле туса хатĕрлесси çинчен, санитари, пурнăçпа йăла, права ыйтăвĕсем çинчен. Нумай врачсем хăйсем ĕçлекен темăсем тăрăх мĕнле литературă суйласа илесси çинчен канашсем ыйтса йанă. Бӳро тӳлесе илмеле посылкăсемпе литературă, йут çĕршывсенчи журналсемпе вырăс журналĕсем çинче тухнă статйасен копийĕсене йарса параť, йаукăла ĕçсем валљи тематикă, методологи тата плансем туса хатĕрлет, урăх хуласенчи врачсене институт библиотекипе усă курма май параť.

Йăвăр чирсем пирки, вĕсенчен сыватас пирки институтри профессорсемпе доцентсем консуљтаци параççĕ.

Врачсен квалификацине ӳстермелли тĕп институтăн консуљтаци бӳровĕн адресĕ çакăн пек: Москва, ул. Большая Грузинская, дом № 10.

(ТАСС).

Мускавпа Владивосток хушшинче сывлăш çулĕ уçăлаť

Граждăнла сывлăш флочĕн Мускавпа Çĕпĕр хушшинчи магистралĕ çинче Мускавпа Владивосток хушшинче хăвăрт çӳрекен самољотсен сывлăш çулне уçма хатĕрлесе çитереççĕ. Хăвăрт çӳрекен самољотсен пĕрремĕш рейсне декабĕрĕн 3-мĕшĕнче иртерме палăртнă.

Çĕнĕ експресла авиаçулĕ çинче почтăпа грузсем тийесе хăвăрт вĕçекен икĕ моторлă „ПС - 40" самољотсем пулаççĕ, вăл самољотсене чи лайăх приборсемпе йĕркеленĕ. Çĕнĕрен уçăлакан сывлăш çулĕ çинче ĕçлеме граждăнла сывлăш флочĕн чи лайăх пилочĕсене уйăраççĕ.

Мускавпа Владивосток хушшинчи хăвăрт çӳрекен самољотсен çыхăнăвне 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнче уçма шутлаççĕ. Самољотсем кашни кунах икĕ йенчен те вĕççе тухмала пулаť.

(ТАСС).

ССР Сойузĕнчи рабочисемпе служăшчисем республикăлă Испани ачисене апат-çимĕçсемпе пулăшни

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ республикăлă Испани ачисене пулăшма пухăннă укçапа çакăн пек продуктăсем туйанса Испанине ăсатма йышăннă:

1. 300 пин пăт тулă;
2. 100 пин банкă сĕт тата ашкакай консервисем;
3. 1000 пăт услам çу.
4. 5000 пăт сахăр.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссен районсенчи пухăвĕсенче

Шăхасан

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен сÿтсе-йаврĕ. Кунсăр пуçне тата пуху районăн 1938 çулти бÿджетне тултарасси мĕнле тăнине те сÿтсе-йаврĕ.

„ПСК(б)П историн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çинчен Харитонăв йулташ доклад туса пачĕ. Харитонăв йулташ докладĕ тăрăх тухса каланă йулташсем парти пропаганди, уйрăмах ПСК(б)П историне вĕренес ĕç иртнĕ çулсенче Шăхасан районĕнчи парторганизацинче çителĕксĕр тăнине палăртса, малашне ку пысăк ĕçе Тĕпком постановленийĕ хушнă пек организацилесе лайăхлатмалине кăтартса пачĕ.

Тухса калакан йулташсем коммуниссене, комсомолĕçсене тата йалти совет интеллигенцине ПСК(б)П историне вĕренме пулăшма консулÿтацисемпе лекцисен пахалăхне ÿстерме кирлине палăртрĕ.

Пуху парти Тĕпкомĕн постановленине ырласа, ăна пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулчĕ.

Районăн 1938 çулти бÿджетне тултарасси питĕ начар тăрать. 9 уйăхра бÿджета доход йенĕпе 80,6 процент тултарнă пулсан, 66 процент çеç расхутланă. Трахом пункчĕсене, вулав çурчĕсене укçа-тенкĕ парса тăрасси начар пырать. Çакна пула районти 10 йалти трахом пункчĕсем ĕçлемеççĕ. Сывлăха сыхлав пайĕ, социалла обеспечени пайĕ хăйсен бÿджечĕсене 41—51 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех государствăна çĕрулми, тырпул тăратас плансене тултарман.

Пуху хуçалăх ĕçĕсен планĕсене тултарас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумалине кăтартса хăварчĕ.

В. Чернов.

Йĕпреç

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленине сÿтсе-йаврĕ.

Дубăв йулташ докладĕ хыççăн прение пурĕ 11 çын тухса каларĕç.

Тухса калакансем парти организаци кружокĕсен хисепне ÿстерессишĕн, коммуниссене пурне те кружоксене „çавăрса илме" тăрăшнипе пропагандă ĕçне çителĕксĕр йĕркеленине палăртрĕç.

Лебедĕв коммунис:

— Епĕ ленинисăма вĕренмелли кружокра тăнă. Епĕр ыйтусене тарăннăн вĕренмен. Ленинисăма вĕренес пулсан политекономине вĕренни кирлĕ. Анчах ПСК(б)П райкомĕ пулăшманнипе политекономине вĕренессине организацилемен. Кружоксене йертсе пыма политикăна лайăх пĕлмен çынсене шанса панă. Ака, Хосинă йулташ кружокра вĕренекенсен ыйтăвĕсене ответлеймен,—тет.

—„Пропагандă ĕçĕнчи çак тĕрĕс мар установкăсене пула,—тет Бодров коммунис,—темиçе çул хушши пĕр кружокрах вĕренмеле пулнă. Епĕ хам та ĕнтĕ парти историне виççĕмĕш çул вĕренетĕп. Анчах программăна нихçан та пĕтермен. Йе çурри йе çурри ытларах вĕренсен кружокăн ĕçĕ сÿнсе ларнă. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ кун пек киревсĕрлĕхе хытă сивлет. Ĕçе çĕнĕле, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ хушнă пек организацилесен çеç марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илме пулать.

Й. Илйин коммунис хăйĕн сăмахĕнче:

— Хăшпĕрисем сăмахлă пропагандăна пичетри пропагандăран мала хунă. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕ пичет марксисăм-ленинисăмăн пропагандин пахаран та паха орудийĕ пулса тăнине хытă асăрхаттарать. Пĕлмен ыйтусене, парти пропагандине йĕркеленĕ лайăх опытсене пичетĕн тăтăшах çутатмала. Ку хăй тĕллĕн вĕренекенсене пысăк пулăшу парĕ,—тет.

Пуху парти Тĕпкомĕн решенине ырларĕ, ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе парти райкомĕн мĕн тумалине кăтартса хăварчĕ.

В. Вишневский.

Шăнкăртам

Партин Шăнкăртам районĕнчи парторганизацин пухăвĕ çак кунсенче „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленине сÿтсе-йавса, ăна ырларĕ.

Избетăв, Феизăв, Ахçанăв, Куципина йулташсем хăйсен сăмахĕнче парти Тĕпкомĕн постановленине пурнăçа кĕртсе парти пропагандине лайăх йĕркелес тĕлĕшпе райкомăн, пуçламĕш организацисен мĕн тумалли çинчен каларĕç. Коммуниссем пурте ПСК(б)П историне вĕренекенсене: коммуниссене, комсомолĕçсене, совет интеллигенцине ваĵĵи пысăк пахалăхлă консуĵтацисемпе лекцисем организацилесе, пропагандă ĕçне чи шанчăклă, çак ĕçе чăннипех тума пултаракансене суйласа илсе пулăшмалли çинчен каларĕç.

Пуху парторганизаци хуçалăхла ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен те сÿтсе-йаврĕ. Район государствăна çĕрулми тăратас плана 80 процент, аш-какай тăратас плана 96 процент тултарнă. Пуринчен ытла натурплатă тыррине парасси кайа йулать (33 процент). Пуху район хуçалăх ĕçĕсемпе кайа йулнине пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ.

Й. Алейĕв.

Çĕнĕ комитетсем ĕçре

Комсомолăн йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсем комсомолĕçсен активлăхне тата ытларах ÿстерчĕç. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче комсомолĕçсем комитетсемпе комсоргсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăйлă критиклеççĕ, комсомолĕçсен шанăçне тÿрре кăларайман çынсене йертсе пырас ĕçрен сирсе хăварса, çĕнĕ комитета, комсорга чи лайăх комсомолĕçсене суйлаççĕ.

Отчотпа суйлав п у х ă в ĕ ч ч е н „Родник" колхоз çумĕнчи комсомол организацин çекретарĕ Чуркин йулташ пулнă. Анчах вăл пуçламĕш организацине йертсе пырайман, çавăнпа та унăн ĕçне пуху начар тесе хакларĕ. Çĕнĕ çекретар С. Романăв йулташ суйлав пуххи хыççăнах хастарлăн ĕçлеме пуçларĕ. Кашнине уйрăм ĕç парса пур комсомолĕçсене те ĕçе хутшăнтарчĕ, политвĕренÿ ĕçне тата çамрăксем хушшинче ĕçлессине аванлатрĕ, суйлав пуххи иртнĕренпе 5 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç.

Иункă йалсоветĕнчи „1-мĕш Май" колхозри комсомол организацинче 3 комсомолĕç çеç тăрса йулнăччĕ, пухусем йĕркелĕ пулмасчĕç. Комсомол организацин çекретарне Шишкин йулташа суйланă хыççăн ĕç чылай аванланчĕ. Халь 6 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç. Политвĕренÿ ĕçне тата колхоз çамрăкĕсем хушшинче ĕçлессине аван йĕркелесе йана.

Мăн-Сĕнтĕрти вăтам шкул çумĕнчи комсомол комитечĕ те план тăрăх, йĕркелĕ ĕçлесе пырать. Отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕренпе 30 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Комсомолĕçсемпе вĕренекен çамрăксем 103 çын оборонă значокĕсен нормисене памалли кружоксенче вĕренеççĕ.

„Çĕнĕ пурнăç" колхоз çумĕнчи комсомол комитечĕ отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕ хыççăн оборонă ĕçне вĕренессине уйрăмăнах лайăхлатрĕ. Комсомолĕçсемпе çамрăксем 28 çын ГСО значокĕсем илчĕç. Колхозри драмкружок та аван ĕçлесе пырать. Комсомолеç А. Михайлăв йулташ йертсе пынипе виçĕ колхозра спектакĵ лартса пачĕç.

„Сатурн" колхозра кăçалхи çентабĕр уйăхĕнче çеç комсомол организаци тунă. Пуçламĕш организацин çекретарĕ Е. Йакăвлĕв йулташ йертсе пынипе комсомолĕçсем колхоз çамрăкĕсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе лайăхлатрĕç. Çĕнĕрен 15 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç, вĕсенчен 7 хĕрача. Комсомолĕçсене пурне те ĕçе хутшăнтарнă, комсомол организацин çтена хаçачĕ тухса тăрать.

Йулашки вăхăтра пурĕ 7 колхозра çĕнĕ пуçламĕш организацисем тунă. Анчах та ку çителĕклĕ мар-ха. Районра комсомол организаци çук колхозсем татах та чылай.

Комсомолăн йертсе пырас ĕçне хутшăннă çĕнĕ активпа лайăх ĕçлесси, пур колхозсенче те комсомол организацисем тăвасси—Тутаркас районĕнчи комсомол организацин çывăх вăхăтра тумалли ĕçĕ. Парторганизаци йертсе пынипе районри комсомол организацийĕ çакна тивĕçлипе пурнăça кĕртĕ.

Н. Йемелйанăв.

ПСÇЛКС Тутаркас райкомĕн çекретарĕ.

Парторгсен курсĕнчен вĕренсе тухрĕç

Парти Чăваш обкомĕ çумĕнчи парторгсен пĕр уйăхлăх курсĕнчен нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче 41 çын вĕренсе тухрĕç.

Парторгсем нумайăшĕ çакнашкал курссенче пĕрремĕш хут пулнă. Вĕсем ПСК(б)П Историне, географине тата ыт. вĕренчĕç. Преподавательсенчен Царйов, Разбитнов йулташсем тăрăшса вĕрентрĕç. Анчах парти Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕнче ĕçлекен Çеменăв йулташ заĵатисене хатĕрлесе пымасăр, пире кирлĕ таран пĕлÿ памарĕ.

Ф. Михайлăв.

Шупашкарти Советсен çурчĕн строительствинче. ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: чернорабочисен чи лайăх бригадирĕ Петр Çеменăв йулташ, нормăна 160 проц. тултарса ĕçлет. Унăн бригади нормăна 130 проц. тултарать.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Государствă дисциплинине çирĕппĕн пăхăнмала

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче 170 мĕлйунлă совет халăхĕ историлĕ чаплă куна—Сталинла Конституци йышăннă куна уйавласа иртерет. Рабочисем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ тата колхозлă хресченсем çак историлĕ куна стахановла ĕçленипе тата социалисăмлă ăмăртăва сарса пынипе производствăра çĕнĕ çĕкленÿ туса палăртма тăрăшаççĕ. Вĕсем çĕнĕ ĕç меслечĕсемпе тата ĕçлĕ кунпа туллин усă курса пур тĕрлĕ ĕçсенче те ĕçтухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ, пирĕн потребительсене пахалăхлă продукцисене йаланах кирлĕ чухлĕ парса тăрас тĕлĕшпе вăй хурса ĕçлеççĕ.

Пирĕн телейлĕ çĕршывра пуçне тĕнчере урăх пĕр патшалăхра та кĕске ĕçкунĕ туни çук. Çавăнпа та ĕçлĕ кунпа туллин усă курас задачă çивĕччĕн тухса тăрать. Апла пулин те хăшпĕр çĕрте ĕçлĕ кунпа туллин усă курма тăрăшни çук. Тĕслĕхшĕн, Шупашкарти профсойузсен çуртĕнче (унта 15 тĕрлĕ профсойузсем вырнаçнă) ĕçлекенсене илсе пăхар. Паллах ĕнтĕ, партипе совет правительстви профсойуз организацисене питех те хисеплĕ ĕç—социалисăм строительствин пур участкисенче те государствă дисциплинине пурнăçласа пырас ĕçе шанса панă. Анчах та профсойузсен хăшпĕр обкомĕсенче ĕçлекенсем çакна ăнланса илмен. Профсойуз организацисем социалисăмлă ăмăртăва тата стахановла йухăма сарса пырасси çинчен нумай кăтартусем параççĕ. Нумай профсойуз обкомĕсем предприйатисемпе учрежденисенче стахановла йухăма сарас тата ăмăртса ĕçлес ыйтупа вырăнсенчи профсойуз организацисен работникĕсемпе канашлусем те нумай иртернĕ. Уйрăмăнах государствăлă çирĕп дисциплинăна пăхăнса ĕçлесси çинчен резолюцисем нумай йышăннă. Кун пек резолюцисене профсойуз организацисенче вуншарăн курма пулать. Профсойузсен облăçри чылай комитечĕсен председательсем местком председательсемпе профком председательсене чĕнсе илсе государствă дисциплинине пăхăнса ĕçлесси çинчен сахал мар хăтăрнă.

Анчах та профсойузсен облăçри комитечĕсен руководительсем чи малтанах хăйсем государствă дисциплинине пăхăнса ĕçлеменнине палăртма тивет. Тĕслĕхшĕн, Кăнтăрти Центрти МТ Станцисен союзĕн обкомнех (председателĕ Йершов йулташ) илсе пăхар. Иершов йулташ государствă дисциплинине пăхăнас тата ĕçлĕ кунна туллин усă курас тĕлĕшпе кашни пухурах хĕрÿлĕн тухса калать. Апла пулин те ку сойузра ĕç вăхăтĕнче шахмăтла выĵаса ларакан сотрудниксене час-часах курма пулать.

Уйрăм сойузсенчи работниксем ĕçе мĕнле çÿреççĕ-ха? Тăхăр сехет çурăра йе 10 сехетре ĕçе пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе пуçламĕш тата вăтам шкулсен союзĕн обкомĕнчи (председателĕ Водоватăв) йулташ работниксене палăртмала. Çак сойузри работниксем ĕçе йаланах кайа йулса çÿреççĕ, хăшпĕр работниксем кунĕ-кунĕпех ĕçе пымаççĕ Çакна пула профсойуз членĕсем профсойуз обкомĕн руководительсене коридорта кĕтсе тăраççĕ. Профсойуз обком председательсене нихăçан та ирхине 9 сехетре ĕçре курма çук. Вĕсем ĕçе 15—30 минут йулса çитеççĕ. Вĕсемпе хăйсен союзĕнче ĕçлекен работниксем ĕçе мĕнле çÿрени çинчен ыйтсан, йаланах: „Манăн пĕр работникĕ Чапайĕвски поçолăкра, тепри унтан кăшт çеç кунтарахра тата çитменнине çанталăкĕ те лайăхах мар",—тенине илтетĕн. Çĕрĕç работникĕсен союзĕн обкомĕн председателĕ Светлов йулташ йаланах çавăн пек калаçать.

Финанспа банк тата аслă шкулсен, аслăлăх учрежденисен тата шкул çулне çитменнисемпе ĕçлекен учрежденисен союзĕн обкомĕсенчи работниксем те ĕçе вăхăтра çÿремеççĕ.

Кун пек тĕслĕхсене темĕн чухлех илсе кăтартма пулать. Анчах та профсойузсен çуртĕнче государствă дисциплинине пăхăнманни, ĕçлĕ кунпа туллин усă курманни çинчен калакан çак фактсене кăтартни те çителĕклĕ тесе шутлатăп. Социалисăмлă ăмарту пирки кунта калаçмаççĕ те. Профсойузсен çуртĕнчи работниксен пĕр пухăвĕнче те вăл ыйтăва тапратман.

Çак статйа профсойузсен обкомĕсен председательсене государствă дисциплинине пăхăнса ĕçлеме, хăйсен обкомĕсенче чăннипех социалисăмла ăмăртса ĕçлеме чĕнĕ тесе шутлатăп.

Астафйĕв.

Государствă учрежденисенче ĕçлекенсен Союзĕн Обком председателĕ.

Кĕперсемпе çăлсене йусамаççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Упакасси йалсоветне пилĕç йал кĕрет. Çав пилĕк йалта 3 кĕпер. Пуçха тухакан вăлаклă çăлсем 10-12 шутланаççĕ. Анчах та йалсоветĕ тата колхозсем çăлсене йĕркелĕ, йусавлă тытма тăрăшмаççĕ.

Лапри Упакасси йалĕн çырми урлă каçакан кĕпер çĕрсе йатăнса анчĕ. Халь урлă каçма май килменнине пула, çырма тĕпĕпе урăх çĕртен аран-аран каçкаласа çÿреççĕ. Çак Лапри Упакасси витĕр Сĕнтĕрвăррине çĕрулми тата ытти продуктăсене нумай йалсенчен турттарса кайаççĕ. Тулли лавсем кĕперсĕр çырмана пырса кĕреççĕ те, хăшпĕр чухне çырма тĕпĕнче çур кун хушши асапланса аяхăта иртереççĕ. Çавăн пекех Ворнойпа Тури Упакасси çырминчи кĕперсем те кĕç-вĕç ишĕлсе анас пек йапăхланса кайнă.

Вăлаклă çăлсемпе кулаталă çăлсем те йапăхса çитрĕç. Лашасем шăвармали влашка çурăлса, ванса пĕтрĕ. Çăл патне пыма май çук, таçтанах лачакаланса тăрать. Апла пулин те, Упакасси йалсовечĕ çак çăла йусаттарма шутламаст. Йалсовечĕ самообложени укçине йăста хурать-ши? Мĕншĕн çав укçапа кĕперсемпе çăлсене йусаттармала мар-ши?

П. КОМИССАРĂВ.

Гитлĕр „кивçен паракан чикĕсем" шырать

Сталин йулташ Америкă журналисĕпе Рой Говардпа калаçнă чух çапла каланă: „Истори çапла калать: мĕнле те пулин государствă тепĕр государствăпа, кÿршĕлĕ маррипе те, вăрçма шут тытсан, вара вăл хăй тапăнас текен государствăн чиккисем патне çитмелли чикĕсем шырама тытăнать. Агрессивлă государствă çавăн пек чикĕсене тупатех вара. Вĕсене вăл, йе 1914 çулта Германи Францине тапăнма Белгине çĕмĕрсе кĕнĕ пек, вăйпа пусмăрласа тупать, йе вăл çавăн пек чикĕсене „кивçен" илет, çапла турĕ Германи Латви тĕлĕшĕпе, калăпăр, 1918 çулта, унăн урлă Ленинград патне çĕмĕрсе тухас шутпа".

Германи фашисăмĕн Балти тинĕсĕ çумĕнчи çĕршывсенчи ĕçĕсем „кивçен чикĕсем" шыранине пит уççăн кăтартса параççĕ. ССР Союзĕпе ултă çĕр километр тăршшĕ чикĕлешсе тăракан Латвипе Естони çине, çавăн пекех, ССР Союзĕн чиккисем патне пымалли çул çинче выртакан Литва çине, фашисла Германи хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене ССР Союзĕ çине тапăнма илсе пымалли территорисем çине пăхнă пек пăхать.

Балтиĵ тинĕсĕн хĕрринче тата Фински залива кĕнĕ çĕрте вырнаçса тăракан çак çĕршывсем, Гитлĕрăн ССР Союзĕ çине, уйрăмăнилсен Ленинград çине тапăнмалли планĕсенче вăрçăпа стратеги тĕлĕшĕнчен питĕ те илĕртекен çĕршывсем пулса тăраççĕ, вĕсем типĕ çĕр çинчен çеç мар, тата тинĕс çинчен тапăнма та аван вырăнсем. Çавăнпа та ĕнтĕ Германи фашисăмĕ вăл çĕршывсенче ларма-тăма пĕлмесĕр активлă ĕç сарса пынинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук; Германи фашисăмĕ вăл çĕршывсен йалхуçалăх рессурсĕсемпе чĕртавар рессурсĕсене хăйĕн çар ыйтăвĕсемпе килĕшÿлĕ тăвасшăн тăрăшать, Естонири, Латвири тата Литвари обшчĕствăлă шухăша хăйне кирлĕ майлă çавăрасшăн çине тăрать, унти влаçа тытса тăракан çынсен ушкăнĕсене Совет Союзне хирĕçле кĕрешÿ йенне сулăнтарасшăн çине тăрса ĕçлет.

Германи фашисăмĕн Балтикă çумĕнчи çĕршывсенчи ĕçĕ хăйĕнче пит те тĕрлĕ формăсене пĕрлештерсе тăрать, вăл ĕçсем вăл государствăсене економикă тĕлĕшĕнчен пусмăрласа илме хăтланнинчен пуçласа, вĕсенче шпионла ĕçсем тăвасси патне, путчсемпе загăвăрсем организацилесси патнех çитет. Балти çĕршывĕсемпе фашисла Германи хушшинчи суту-илÿ ĕçĕсен çиçтемине çакăн пек тунă: хăйсен йалхуçалăх таварĕсене Германине сутса илнĕ укçапа вăл çĕршывсен промышлĕннăç таварĕсене ирĕксĕрех Германирен кăна туйанмала пулса тăраççĕ. Çапла вара Балти çĕршывĕсен хăйсем урăх çĕршыва сутса тунă укçана йе Германире вырттармала, урăхла каласан, Германи фашисăмне кивçен парса тăмала пулать, йе вăл укçапа Германирен, Германи фашисăмне кăмăла кайакан условисем тăрăх, таварсем туйаннă çĕрте усă курмала пулса тăрать. Германи фашисăмĕ йалхуçалăх таварĕсене Балти тинĕсĕ çумĕнчи çĕршывсенчен туйанассине йулашки вăхăтра чылай пысăклатнă. Портлă хуласенче — Клайпедă, Лепайа, Ригă тата Таллин—кунсеренех Германине йама пăрахутсем çине йалхуçалăх продуктисем тата чĕртавар тийеççĕ. Цифрăсем кăтартнă тăрăх, Германипе Балти çĕршывĕсем хушшинчи суту-илÿ оборочĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 1938 çулта чылай пысăкланнă. Йулашки виçĕ çул хушшинче фашисла Германи вăл çĕршывсенчен йалхуçалăх продуктисем туйанассине ÿстернĕ, ку ĕнтĕ çак таблицăран курăнать:

Германи Балтикă çĕршывĕсенчен таварсем илни.

(Германин мĕлйун маркипе шутласан)

	1935 çул.	1936 çул.	1937 çул.
Естонирен	13,1	13,8	23,7
Латвирен	31,1	32,2	45,7
Литваран	2,6	9,1	17,2

Çакăнпа пĕрлех Германи çак çĕршывсен промышлĕннăçне нумай укçа-тенкĕ хурать. Уйрăмăн илсен, нефть продуктисем çитменнипе хытă нушаланакан фашисла Германине Естонипе Литва сланĕçĕ пит интереслентерет: вăл сланĕçран бензин тата сĕрмелли çу таврашсем туса кăлараççĕ.

Балтикă çĕршывĕсен суту-илÿ оборотĕнче йаланах пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнă Англине хаĵхи вăхăтра унтан Германи хĕссе кăларса пырать.

Вăл çĕршывсенчи влаçа тытса тăракан ушкăнсем, кулаксемпе капиталиссен çÿлти сийĕнчен тăраканскерсем, халиччен пĕтĕмĕшпех Англипе Франци майлă çул тытса пынă. Йулашки вăхăтра вара фашисла Германи умĕнче хăраса тăнипе, çавăнпа та унпа „çывăх" хутшăнусем тытса тăма тăрăшнипе, агрессăра ытларах та ытларах уступкăсем парса пыраççĕ. Çапла, сăмахран, фашисла Германи хушнипе Литва Клайпедă облăçĕнче туса хунă вăрçă чухнехи пек йĕркене пăрахăçа кăларнă, çапла туни вара Гитлĕрăн Литвари агентуришĕн ишĕлтерÿлĕ ĕçсем туса пыма тата ытларах çăмăллатса пырать. Çавăнпа та, Клайпедă облăçĕнчи вăрçă чухнехи пек йĕркене пĕтерсе хунă хыççăнах Клайпедă хулинче, Берлинран кăтартса панипе, „нимĕçсен куĵтурăлă союзне" туса хунинчен тĕлĕнмелли те çук, вăл „сойуза" Гитлĕр агенчĕ Нейман йертсе пырать; Клайпедă облăçне хĕçпăшалпа усă курсах Германи çумне пĕрлештерме хăтланнăшăн Нейманă 1934 çулта судпа айăпланă. Çак союзăн йатне, унăн молодчикĕсен тумĕсен формине пĕтĕмпех Судет облăçĕнчи Генлейнăн фашисла организацинчен илнĕ.

Естони Германин çар самолĵочĕсемпе граждăнла самоĵочĕсене ескадрилйи-ескадрилйипех хăйĕн территорийĕ çине „хăнана" пырса кайма ирĕк парать. Германирен Естонине тĕрлĕрен „туриссемпе" „журналиссем" пысăк группăсемпе пырасси нумайланнă. Гестапон çак агенчĕсем Естонин совет чикки хĕрринчи пайĕпе уйрăмах хытă интереслеççĕ. Хăйпе фашисла Германи хушшинчи çывăх хутшăнусене сарса пыракан Латвире те çакăн йеверлĕ картинах курăнать.

Литва, Латви тата Естони, 1934 çултах Балти Антанти тенĕскере кĕрсе пĕрлешнĕскерсем, хăйсен тулашри политикинче пĕр-пĕринпе килĕштерсе пыраççĕ. Лигă нацин йулашки, çентаберти çессинче çак çĕршывсен правительствисем: Лигă нацин пактне улăштарасси çинчен панă сĕнÿшĕн тăратпăр, Лигă наци уставĕн 16-мĕш статйине, агрессăра хирĕç вăрçăлă тата економикăлă санкцисем тăвасси çинчен калакан статйана, хăмăршăн обйазательнăй мар тесе шутлатпăр, тесе каланă. Лигă нацин 16-ш статйи çинчен тăракан ыйтăва тата „нейтралитет" политики текен политикăна çак çĕршывсен пичечĕ анлăн сÿтсе-йавнă. Хаçатсем „нейтралитет" тенин идейине пур майсемпе те пропагандăланă тата халь те пропагандăлаççĕ. Правительствă хаçачĕсем Мÿнхĕнри кавара темтепĕр каласа мухтарĕç тата фашисла Германи çинчен йăпăлтатса çыраççĕ.

Уççăнах курăнса тăрать, Лигă нацин 16-мĕш статйине пăрахăçа кăларни, урăхла каласан, агрессăра коллективлă вăйпа çаварлăхласинчен пăрăнни, çавăн пекех „нейтралитет" политики те фашисла государствăсен планĕсене пурнăçа кĕртме пулăшаççĕ кăна, уступкăсен политики вĕсен çăткăн кăмăлĕсене тата ытларах ÿстерет.

Анчах Балти çумĕнчи государствăсенчи влаçа тытса тăракан ушкăнсем фашисла агрессăрсене кăмăла кайасшăн тăрăшаççĕ пулсан, вĕсем ăна пит инçене кĕрсе кайакан уступкăсем пама хатĕрленеççĕ пулсан, вăл çĕршывсенчи халăхсем вăл политикăпа пĕрре те килĕшмеççĕ. Фашисла агрессăрсене кăмăл тăвасшăн тăрăшни мирлĕ пурнăçа сыхласа усрама май памасть çеç мар, йăлтах урăхла, çавăн пек туни вăл Германи фашисăмĕн йут çĕршывсене туртса илмелли вăрă-хурахла планĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртме пулăшать кăна. Ĕççынни массисем çакна пĕлсе тăраççĕ. Балти тинĕсĕ çумĕнчи çĕршывсенчи ĕççыннисен массисем пĕтĕмĕшпех Совет Союзĕпе туслă пулассишĕн, унăн мирлĕ политикишĕн тăраççĕ. Совет Союзне, паллах, йуратакан рабочисем хушшинче кăна мар,тата интеллигенци хушшинче хăйсен çĕршывĕсен тÿрĕ чĕрелĕ патриочĕсем хушшинче те, вăрçă пулас пулсан Балтикă çĕршывĕсенчи халăхсем Совет Союзĕ йенне тăмала, ăна фашисăма хирĕç кĕрешес ĕçре пулăшмала, текен шухăш сарăлнă. Çак çынсем хушшинче: Совет Союзĕ çĕнтерни мирлĕ пурнăç, Балти тинĕсĕ çумĕнчи çĕршывсене никама пăхăнмасăр пурăнмала туса хурать, тесе шухăшлаççĕ.

1914—1918 çулсенче, империалисăмлă вăрçă вăхăтĕнче хăйсене кайзĕр командованийĕ мĕнле тыткаланине Балти тинĕсĕ çумĕнчи çĕршывсенчи ĕççыннисен массисем манман, ун чухне кайзĕр командованийĕ литовĕçсене, латышсене тата естонĕçсене Балти çĕршывĕсенчен хуса кăларма, унта нимĕç принцĕсем пуç пулса тăракан нимĕç кĭнажĕствисем туса хума ĕмĕтленнĕ. Халĵхи вăхăтра Германи фашисĕсем те çакăн çинченех ĕмĕтленеççĕ, вĕсем, ыттисемсĕр пуçне тата, çĕрсене нимĕç баронĕсене таварса пама, хăй вăхăтĕнче вăл çĕрсене пайласа уйăрнă хресченсене хăйăррăн тавăрма ĕмĕтленеççĕ.

Аслă Совет Союзĕнчи халăхсемшĕн, нумайах пулмасть Хасан патĕнче Йапони самурайĕсене хирĕç пулнă çапăçусенче хăйĕн патăрлăхне çĕнĕрен кăтартса панă Хĕрлĕ Çар сыхласа тăракан совет халăхĕсемшĕн, хĕвеланăçĕнчи фашисла агрессăрсем те, хĕвелтухăçĕнчи фашисла агрессăрсем те хăрушă мар. Совет Союзĕн халăхĕсем тата вĕсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ Совет Союзĕн чиккисене кирек хăш йенчен пăсма хăтланакан кирек-хăш тăшмана та отпор пама хатĕр тăраççĕ.

А. АЗАРИН.

02

Резинăран йапаласем тăвакан савăт строительствине сыватмала

...ал пирĕн Чăваш республикĕ ...шлĕннăç йенĕпе туна ӳсĕм...чи палли вăл—промышлĕн...малала çĕнĕ предприйатисем ...нипе вăйлатма тытăнни пулать. Республикăра çĕнĕ пысăк хапрăк-савăтсем тума пуçланă. Вĕсенчен ...ĕри—резинăран йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт. Ку савăт строительствинче халĕ хĕрӳлĕ тапăр, унта пĕтĕм строительства ĕçĕсене ăнăçлăн илсе пымала тăвассине татса паракан ĕçсене—рабочисем валли пурăнмали çуртсем, складсем тата ыт. тăвасси, строительства материалĕсем хатĕрлесси пырать.

Анчах строительства ĕçĕ тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпе пырать теме çук-ха. Строительства планне тултарасси кайа йулнă. Капитальнай ĕçсен пĕррĕмĕш кварталти планне 82,5 процент, иккĕмĕш кварталти планне 74,5 процент тата виççĕмĕш кварталти планне 98 процент çеç тултарнă. Çапла виçĕ квартал хушшинче строительства ĕçне хывма панă укçаран чылай пайĕ усă курмасăр йулнă.

Уйрăм обйектсене тăвасси мĕнле пынине илсен строительствăра сӳрĕклĕх сарăлни хыттăнах палăрать. Пурăнмали çуртсем тăвасси начар пырать. Строительства площадки патне çул туман. Площадкăна шыв, електроенерги тăратас йенĕпе тумали ĕçсене те тивĕçлипе пурнăçа кĕртме тытăнман т. ыт. те.

Мĕншĕн çапла? Догăвăр тăрăх пройектла заданисене апрелĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтермеле пулнă. Октябĕр уйăхĕнче çеç туса пĕтерçирĕплетнĕ. Çакăншкал пулин ...тĕм хатĕрленӳ ĕçне кайа хăвар... Кун хыççăн та пулин строительства кайа йулнине пĕтермелисем пулнă. Анчах строительства начальникĕ Астафйĕв йулташпа аслă инженер Андрейĕв йулташ строительствăна мĕнле майсемпе тăвассине татса паман пирки ĕçсем халĕ те вăрах пыраççĕ.

Строительства хăй тĕллĕн кăна пыни çак фактсенчен те лайăх курăнать. Кунта рабочисем хушшинче политикăла-массăлă ĕç çук. Калаçусем туса ирттересси, хаçат-журналсем вуласси пулман. Вĕренӳ ĕçне организацилемен. Общĕствăлă организацисем пачах ĕçлемеççĕ.

Рабочисем валли ĕçлеме, пурăнма условисем туса парассишĕн те тăрăшакан çук. Строительства площадкинче ку тарана çитсе те столовăй организацилемен. Лавккара та кирлĕ таварсем çителĕклĕ пулмаççĕ. Общежитисенче йĕркелĕх, тасалăх сахал.

Строительствăра стахановла ĕçлекенсем те пур. Анчах вĕсемпе никам та ĕçлемест. Профсойуз организаци строительства руководствипе рабочисен хушшинче хирĕçӳ кăларма кăна пĕлет.

Строительства ĕçĕ начар пыни условисем çуккинчен мар, строительства руководителĕсем ответлăха туймасăр ĕçленинчен, строительствăра йĕркелĕх çуккинчен килнĕ. Строительства начальникĕпе аслă инженер ĕçе йĕркелессишĕн тăрăшас вырăнне пĕр-пĕрипе тавлашса вăхăта ирттереççĕ. Тĕрлĕ ыйтусене тивĕçлĕ органсем умне хăйулăн лартас вырăнне—„пире пулăшмаççĕ“ тесе лăпланса тăраççĕ. Çакăн пек пулни работниксем хушшинче дисциплинăна, ответлăха сӳрĕклететет.

Строительствăра ĕçлеме кадрсем пухас ĕçе большевикла тимлĕхпе туса пымаççĕ. Çавна пула строительствăна шанчăксăр елементсем хĕсĕнсе кĕнĕ. Снабжени пайĕн начальникĕ Комаров ĕçкĕ-çикĕ ăшне путнă. Вăл хăйĕн тавра йурăхсăр çынсене йăвăçтарса пырать. Çавăн пекех склад пуçлăхĕ Бронникăв та хăйĕн ĕçне тивĕçлĕн туса пымасть, пĕрмай ĕçкĕ-çикĕре çӳрет. Кунашкал фактсем тата та пур. Руководителĕсем вĕсем çинчен пĕлеççĕ.

Савăта ĕçе йарсан савăтра ĕçлекен кадрсене халех хатĕрлеме тытăнмала. Анчах ку ĕçе пуçăнманха. Рабочисем хушшинче техника вĕренӳне те пуçарман.

Строительствăна пулăшу парас тĕлĕшпе парти Шупашкар хула комитечĕ, хула совечĕ тата сутуилӳ организацисем начар ĕçлеççĕ. Парти хула комитечĕ строительства пуçланнăранпа нумай вăхăт иртнĕ пулсан та унта парти организацине туман. Комсомол организаци тăвас пирки те никам та шутламан. Çапла строительствăра ĕçлекен коммунистсемпе комсомолецсем те ку таранччен ытти организацисенче тăнă.

Çак ответлă строительствăна çапла хăварма май çук. Строительствăран шанчăксăр елементсене тасатса унта ĕçлеме тӳрĕ çынсене лартмала. Партипе комсомолăн хулари организацисен тата хула совечĕн строительствăна халех татăклă пулăшу парса капитальнай ĕçсен 4-мĕш квартал планне ăнăçлăн тата пысăк пахалăхпа тултармала тăвас пулать.

Резинăран йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт строительствинче.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Резинăран йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт строительствинчи Рогожникăв йертсе пыракан плотниксен бригадинчи чи лайăх ударник Д. О. Лоскутăв йулташ, нормăна 200 процент таран тултарать.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Çирĕп йĕрке çук

Пирĕн Вăрмарти „Спортинвентарь“ хапрăкĕн руководителĕсем кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ. Цех начальникĕсем хушшинче çирĕп йĕрке, дисциплинă çук. Çавна пула цех начальникĕсем хăйсен ирĕкĕпе мĕн тума шутлаççĕ—çавна тума тăрăшаççĕ.

Епĕ хапрăкра иккĕмĕш çул ĕçлетĕп. Çак хушăра мана 4—5 вырăна куçарчĕç. Малтанах фрезĕр станокĕ çинче, унтан токарнăй, „фуганок“ станоксем çинче ĕçлерĕм. Пур çĕрте те епĕ тăрăшса ĕçлерĕм, браксем туман. Лайăх ĕçленĕшĕн кăçал мана приёмщике тăратрĕç.

Анчах приёмщикре епĕ нумайах ĕçлеймерĕм. Цех начальникĕ М. Николайĕв пĕр сăлтавсăрах ĕçрен кăларчĕ. Ман вырăна хăйĕн тусне илчĕ.

Çавăн пекех машинăсен цехĕнчи маçтăр М. Тихăнăв та чылай вăхăт хушши ĕçленĕ А. Кириллăва йулташа урăх ĕçе—уйăхне 61 тенкĕ тӳлекен ĕçе куçарчĕ.

Пĕлесчĕ, хапрăкра çирĕп йĕрке хăçан пулать-ши?

Рабочи—А. Петров.

—о—

Ипподрома вăхăтра туса пĕтермеле

Пирĕн республикăра лайăх йышши ăратлă лашасене валли ипподром çук. Çавăнпа та республикăри чаплă лашасене Горькири тата Хусанти ипподромсенче сăнаса палăртмала пулчĕ. Çакă вăл пите нумай укçа-тенкĕ тăкаклать.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх, 1939 çултан вара пирĕн республикăра хамăрăн ипподром пулмала. Кун пирки Стройтрестпа догăвăр та турнă. Анчах вăл хăйĕн догăвăрне вăхăтра пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмасть.

Стройтрестăн хăй çине илнĕ ĕçшĕн ответлă пулмала, ипподрома вăхăтра туса пĕтермеле.

А. Платонăв.

Стахановла йухăма вăйлатсах пымала

Ĕççыннисен пурнăçĕ тĕпренех лайăхланнă, çĕнĕ техникăна вĕренсе алла çавăрса илнĕ тата çĕнĕ кадрсем ӳснĕ никĕс çинче пуçланса кайнă стахановла йухăм халăх хуçалăхĕн пур отраслисене те çиçĕмлĕ хăвăртлăхсемпе çавăрса илсе, массăлă йухăм пулса тăчĕ.

Сталин йулташ стахановецсен Пĕтĕм Сойузри пĕррĕмĕш канашлăвĕнче çапла каларĕ: „Стахановла йухăм вăл рабочисемпе работницăсем халь хи техникăла нормăсене айа тума, халь хи пройектла пултарулăха айа тума, халь хи производствăлă плансемпе балансене айа тума ĕмĕт лартнă йухăм пулать. Айа тумах—мĕншĕн тесен вĕсем, çав нормăсем, пирĕн халь хи кунсемшĕн, пирĕн халь хи çĕнĕ çынсемшĕн кивве тухрĕç ĕнтĕ. Çак йухăм техникă çине кивĕле пăхнине çĕмĕрет, техникăла кивĕ нормăсене, кивĕ пройектла пултарулăхсене, кивĕ производствăлă плансене çĕмĕрет, вăл çĕнĕ, çӳлĕрех техникăла нормăсем, пройектла пултарулăхсем, производствăлă плансем тума хушать. Вăл пирĕн промышленноçра революци тăвас йухăм. Çавăнпа те ĕнтĕ вăл, стахановла йухăм, тĕпрен илсен революцилле таран йухăм пулса тăрать“.

Стахановла йухăм, ССР Сойузĕнчи халăх хуçалăхĕн пур участкисенчи пекех, Чăваш республикин промышленноçĕнче те анлăн сарăлса пычĕ, сарăлса пырать те. Ăна акă çакă тĕслĕхсем те аван кăтартса параççĕ: 1936 çулта йанвар уйăхĕнче пĕтĕмпе 321 стахановец пулнă, 1938 çулăн октябĕрĕн 1-мĕшне промышленноçра ĕçлекенсем хушшинче 3.500 стахановеца çитнĕ.

Стахановецсем ĕç вырăнне лайăх организацилесе, производства процесне рационализацилесе ĕç тухăçлăхне пысăккăн ӳстерсе пыраççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановецсем: столяр Иванунин йулташ нормăна 280 процент тултарса уйăхра 728 тенкĕ ĕçлесе илет. Станочник Гурйанăв—282 процент, Вавилăв 225 процент, Куславкка комбинатĕнчи грузчик Рузанăв, сборщик Абдраханăв йулташсем 263—269 процент, Çĕмĕрлери „Большевик“ савăтри выгрузчиксем Сулимăв, Смирнов, Фомин, чĕр тавар парса тăракан Захарăв—210 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Промысла кооперацийĕнче те паха тĕслĕхсем кăтартакан стахановецсем сахал мар. Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан ертелти çĕвĕçсем — Хорошилăвă, Маркăвă, станочницă Йефремăвă (Çĕмĕрле), рамщик Лаптĕв (Голодайĕвкă) плавран 45—135 процент ирттерсе тултараççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем кашни предприйатирех, кашни цехрах пур. Çак çĕнĕ кадрсем вĕсем „хăйсен ĕçĕн техникине пĕтĕмпех алла илнĕ, техникăран мĕн хĕссе сăрхăнтарса илме май пуррине пĕтĕмпех илме пултаракан çынсем“ (Сталин).

Стахановла йухăмра çамрăксем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вăтамăн шутласан кăçалхи октябĕрĕн 1-не стахановецсен ретĕнче 25 çула çитменнисем 1.800 çын шутланаççĕ. Чи лайăх стахановец-комсомолецсем Льуткова (Куславкка комбиначĕ), Чукăвă (Улатăрти 8-мĕш № савăт), Зульайĕв (Çĕмĕрлери „Большевик“ савăт) т. ыт. йулташсем техминимум кружокĕсенчен вĕренсе тухса государствă техекзаменне „отличнă“ тата „хорошо“ паллăсемпе панă. Вĕсем ĕçре пĕр браксăр, простой тумасăр ĕçлеççĕ, рабочисемпе работницăсене пулăшаççĕ. Вĕсемех предприйатири, цехри, бригадăри тата уйрăм рабочисем хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн организаторĕсем пулса тăраççĕ.

Стахановла ĕçĕн метăчĕсене сарса пынă май предприйатисенче ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилес, технологи процесне кирлĕ пек йĕркелес, инструмент хуçалăхне лайăхлатас йенĕпе чылай ӳсĕмсем тунă. Çав вăхăтрах ку йенĕпе йапăх ĕçлекен предприйатисем те пур-ха. Хăшпĕр хапрăксемпе савăтсенче стахановла йухăма вăйлатса пырас тĕлĕшпе инженерла-техникла работниксем тата партипе профсойуз организацисем çителĕклĕ таран пулăшу памаççĕ. Çавна пула стахановецсен хисепĕ хăшпĕр çĕрте ӳсмест. Çĕмĕрле комбинатĕнче кăçал иййунĕн 1-мĕшне 769 стахановец пулнă пулсан, октябĕрĕн 1-мĕшне 648 стахановец çеç шутланать. Апат-çимĕç промышленноçĕнче стахановецсен хисепĕ пĕрерĕн çеç шутланать. Йетĕрнери çу савăтĕнче, Чăвашмельтрест арманĕсенче, крахмал савăчĕсенче халĕ те стахановецсене палăртман. Вăл предприйатисенче стахановецсене, çавăн пекех рабочисене хавасланса, хастарланса ĕçлеме большевикла пулăшса пыни курăнмасть, стахановецсенчен ĕçрен пăрахса кайнисем пулкалаççĕ.

Предприйати руководителĕсем стахановла йухăма çителĕксĕр йертсе пыраççĕ. Чылай предприйатисенче ĕç вырăнĕсене, техникăна вĕренес ĕçе çӳлĕ пусăма лартман. Сăтăрçăсен йулашкийĕсене пĕтерес йенĕпе йапăх ĕçлеççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ государствă промышленноçĕ тата промысла кооперацисем 10 уйăхри плана тултарман, ĕç тухăçлăхне хăпартас йенĕпе те кăçалхи çулăн 9 уйăх планĕ тулман.

Чăнах та, ĕç тухăçлăхне хăпартассипе уйрăм предприйатисем малала утăмсем турĕç. Çĕмĕрле комбиначĕ, Чăвашвăрманпром ĕç тухăçлăхне ӳстерес плана 102 процент ытла, Шупашкарти тир-сăран савăчĕ—109 процент тултарнă. Анчах вăл ӳсĕмсем ытти отраслĕсем тата предприйатисем начар ĕçленине витме пултараймаççĕ.

ПСК(б)П Чăваш организацин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ промышленноç йулса пынине палăртса парти, профсойуз, совет организацисене „промышленноçра тата транспăртра сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тата тăшмана тымарсене тăпăлтарса кăларас тĕлĕшпе татăклăн ĕçлеме пуçăнма, кашни предприйати производства программисене хисепĕ тата пахалăхĕ йенĕпе те пĕтĕмпех тултармала тума“ хушса хăварчĕ. Çакăнтах „правительствă куллен кирлĕ таварсене туса кăларасси çинчен йышăннă решенине пурнăçа кĕртесси çине, социализмлă ăмăртава тата массăлă стахановла йухăма малала сарса пырасси çине, партире тата партире тăман большевиксене, уйрăмах хĕрарăмсене йертсе пырас ĕçе хăйулăн лартасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала. Ĕç тухăçлăхне малала хăпартассишĕн, продукци туса кăларма ларакан хака йӳнетессишĕн, браксене тата аварисене пĕтерессишĕн, государствăн, ĕçлĕхĕн тата финанс дисциплинине çирĕплетессишĕн, чĕр таварсемпе продуктăсене перекетлĕ расхутлассишĕн тата сыхласа усрассишĕн, хапрăксемпе савăтсен оборудовани вăйĕпе туллин усă курассишĕн çине тăрса кĕрешмеле“ тесе кăтартса панă.

Хăшпĕр предприйати руководителĕсем ПСК(б)П облаç организацин XIX-мĕш конференци решенийĕсене пурнăçа кĕртессипе халĕ те большевикла ĕçе тытăнман-ха. Предприйати директăрĕсен, план—хуçалăх ĕçĕнче саккун пулса тăнине ăнланма тивĕçлĕ ĕнтĕ. Плана тултарма пур условисем те пур. Хоçайствĕнниксен предприйатин економикипе финанс ыйтăвне тĕрĕс, пĕлсе пурнăçласа пыни, çителĕклĕ таран материал тăратни, аварисемпе простойсене пĕтерни, рабочисене пурăнма лайăх условисем туса пани тата культмассăлă ăнлантарулă ĕçе, стахановла йухăма вăйлатса пыни çеç кирлĕ.

Риф.

Чĕрепе туйатпăр

Ĕлĕкхи вăхăтра ĕç пултарулăхне çухатнă çынсем—инвалидсем—патшалăхран пулăшу илесси çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Пирĕн пек куççăр çынсем темиçе пиншерĕн ыйткаласа çӳренĕ. Пуриччен ытла хĕрарăмсене йăвăр тивнĕ, мĕншĕн тесен, вĕсене унчух çĕр паман. Пире: „Есĕр çылăхлă, çавăнпа куççăр пулнă“, тесе хăратнă. Хăшĕсем тата: „Кимет тытнă, йумăç патне кайас пулать“, тенĕ. Куççăр çынна çакăн пек сăмахсене илтме питех те йăвăр пулнă.

Совет влаçĕ пире те пурнăç пачĕ. Халь епĕр те, мĕнпур халăхпа пĕрле, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, социализм тăвас ĕçе хутшăнма тивĕçлĕ пултамăр. Хамăрăн ирĕклĕ тăван çĕршывра куççăрсем те вĕренсе пысăк пĕлӳлĕ çынсем пулма пултарнишĕн савăнатпăр.

Акă, пĕр тĕслĕх илĕпĕр. Çĕнĕ Чурачăк (Çĕрпӳ р.) çынни Илйин йулташ куççăр пулин те коммунисла аслă шкултан вĕренсе тухрĕ. Халĕ вăл Хусанти университетра вĕренет. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Халĕ куççăрсем ĕçлев правипе те пысăккăн усă кураççĕ. Чылай çĕрте халĕ ĕнтĕ куççăрсем валли вĕренӳпе производствă маçтерскойĕсем уçнă.

Кунта епĕ Сĕренкасси йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) куççăрсен производствăлă ертелĕ çинчен каласа парасшăн. Ертелре мĕн пурĕ 40 çын. Вĕсем кунне сакăр сехет ĕçлеççĕ, çав шутран виçĕ сехет вĕренеççĕ. Пушă вăхăта усăллă ирттерме драмкружок, хор, литературă кружокĕсем тата шăвлă оркестр организациленĕ. Хор кружокĕ вырăсла тата чăвашла йурăсене питĕ аван йурлама вĕренсе çитрĕ. Нумай пулмасть пулса иртнĕ вечĕрта хор кружокĕпе шăвлă оркестр хăйсен пултарулăхĕсене лайăх кăтартса пачĕç.

Епĕр пирĕн тăван çĕршывăн çĕнтерĕвĕсене куçпа курмастпăр пулин те чĕрепе лайăх туйса тăратпăр. Çĕршыв пире ĕçлеме, вĕренме, канма ирĕк пачĕ.

А. Васильйĕв.

Н. Илпек

Пĕр каçхине

(ОЧĔРК)

Тавралăх çĕрлехи ыйăхра. Чару... çилтăман кĕрлет. Çил темĕнле ...сăпа шăхăрать те йăвăç турачĕсене пĕррĕн-пĕррĕн тытса çавăрать, ...лет. „Дружок“ пĕрмайах пирĕн ...ра йуртать. Пайанхи пек асар...ĕр çилтăмана çеç курнă-и вăл икĕ ...хушшинче? Пĕрле çӳренĕ çĕрсенче пирĕн пуççем çийĕн пĕр ...тчен çеç пульăсем вĕçнĕ-и? ...артлатнă шăршăннă тункаты.

Çĕрлехи тăшманăн вут пек симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртатакан куçĕсем пирĕн куççемпе чикĕшес пек ...улнă самантсем те тĕле килнĕ. ...ружок хăй çамрăк пулсан та тĕрлĕрен йăвăр сехетсене сахал мар курнă. Кăлăхран ура та йарса пусас çук вăл. Йăвăç çинчен турат ...ес-тăвас пулсан хăлхине те çĕклемест. Чăн вĕçен-кайăк сасси илтĕнсен пуçне çĕклетсе ухмасть. Умĕнчен иртекен уксах мулкача та пĕр сăлтавсăр кӳрентермест. Çӳретĕрех мулкачă...

Заставă начальникĕ „Дружок“ çине пăхса илсе чикĕре вăл пит лайăх тус иккенне палăртрĕ. Вăл нумай каласмасть. Унăн çирĕп сăмахĕсем касса виçнĕ пек вырнаçуллă тухаççĕ. Йепле ывăнмасть вăл çакăн пек тĕттĕм çилтăманлă каçра! Заставă начальникĕ пайанхи пек çилтăман варкăшнă çĕрсенче ыйăх мĕн иккенне пĕлмест.

Çуннă вырăна çитрĕмĕр.

Заставă начальникĕ вăхăтлăха манран уйăрăлчĕ те куçран çухалчĕ.

Пайтах çĕре çитнĕ вăл. Тĕрлĕ тĕлсем патне çитсе тĕрĕсленĕ, йĕрсем шыранă. Ултавлă варсенчи кĕрт ăшне кĕрсе урине шыв витернĕ. Нимĕн те палăрман.

— Сыхлăр, пĕр йапалана та, пĕр тĕмескене те ан йĕненĕр, ыттине, шансах тăратăп, пурне те хăвăр лайăх пĕлетĕр,—терĕ вăл тĕттĕмеле пăхса.

Вăхăт иртет. Çилтăман çаплах чарăнмасть. Чарăнма мар, вăл тата хирĕçрех пуçланă пек туйăнать. Умри йур капламне çĕклесе самантра тĕпретсе пăрахать те, пĕрчине хăвармиччен хăваласа кайать. Ун вырăнне урăх йенчен вĕркесе тулать. Епĕ тĕмесем хушшинчен иртрĕм. Усă çĕреле тухрăм.

Тăшман питĕ чейе. Вăтă кушак пек йăпшăнса пирĕн çĕршыва кĕрессшĕн çунать вăл. Пограничниксен кирек хăçан та унран чейерех пулмала. Ăçта, мĕнле вырăнта тăшман хăйне йепле тытассине тахçан малтан виçе çине хунă пек пĕлсе тăмала. Маншăн халĕ участкăри пур тĕмесемпе тункатасем те, сăртсемпе варсем те хамăр килти пахча пекех паллă. Çакăнта килмеле пулсан епĕ куçа хупса урапа хыпашланипе те çитес вырăна çитсе тăратăн.

Çилтăман ман çине уртăннă пекех туйăнать. Ман пите чăмăртать вăл, куçа хĕстерет, сăмсаран чĕпĕтет. Утма йепле кансĕр пулин те, куçран вут сирпĕннĕ пек туйăнсан та, епĕ малала утатăп. „Дружок“ ман умра пырать. Чарăнтăм. Умра нимĕн те курăнмасть. Каллех утатăп. Чарăнатăп. Итлетĕп. Пĕшкĕнсе пăхатăп. Перчаткăпа куç хупахĕ çине ларнă йура шăлатăп.

„Дружок“ ман çине пăхса илчĕ. Хĕрхенетĕп ăна епĕ, йытă вĕт. Çакăн пек сивĕ çанталăкра çапах та шăнать пуль вăл. Лăпсăркка хура çăмĕ çăра тăман витер тĕттĕм-симĕсĕн йăлтăртатать.

„Дружок“ хăнăхнă майпа кăпăшка йура шăршларĕ те сасартăк лăпчăнса катана пăхса илчĕ. Унтан вара ман ура çумĕнченех сĕртĕнсе пĕр утăм пек малала туртăнчĕ. Хăйне ирĕке йама тархасласа ыйтнă пек пăхса илчĕ. „Дружок“ мĕн те пулин сисрех ĕнтĕ. Ăна епĕ васкаса вĕçертрĕм.

Манран сулахай йенче йулакан вăрман пĕр канăçсăр шăвлать. Есĕклесе макăрать пек çилтăман.

Пĕр лупашкана çитрĕмĕр. Ман ура вырăнĕ-вырăнĕпе кĕрт ăшне путать. Çăматă ăшне шыв кĕнине туйатăп та ĕнтĕ. Вĕриленчĕ ура. Капла, темĕнле, утма та çăмăлтарах пек туйăнать.

„Дружок“ чарăнчĕ. Тăсмака сăмсипе хашлаттарса шăршларĕ. Пĕшкĕнсе пăхатăп. Ĕненмесĕр тата пĕшкĕнерех выртса пăхатăп... Ак, йĕр... йĕр... чăнах!

Вĕр-çĕнĕ йĕре çемçе йур шăлать. Вăхăтлăха чĕркуçленсе лартăм. Тен, каллех иртсе пырĕç, пĕччен кăна мар пулĕ тен?.. Асăрханни хуть ăçта та халанах хаклă. Анчах умри йĕр çак сехетрех йур айне пула пуçларĕ. Манпа пĕрлех „Дружок“ та выртса итлет. Вăл текех кĕтсе тăрасшăн мар. Малала, вăрман йеннеле туртăнать. Кăштах чĕвен тăтăм. Çамкана тар тухрĕ. Аллăмсем хăш вăхăтра вĕриленсе кайнине те сисмерĕм. Пăшала хыттăн чăмăртатăп та „Дружок“ хыççăн васкатăп. „Дружок“ йуртать.

Тăман лăпланчĕ. Ĕнтĕ çил те майĕперех вĕрет. Тахçанах çурçĕр иртнине куратăп. Шăплăхра мĕнле те пулин сасă илтĕнмест-и тетĕп. Нимĕн те илтĕнмест. Иэр палăрать, тĕттĕм кăштах сирĕле пуçларĕ.

Сасартăк „Дружок“ хыттăн туртăнма пуçларĕ. Чим-ха, чарăн „Дружок“, тата пĕр минутлăха çеç... Çук, вĕçертсе йамалах килчĕ.

„Дружок“ сикрĕ те, тĕмсен тĕлне пулса куç умĕнчен çухалчĕ...

Тарланă питĕме шăлса илтĕм. Мана халь нимĕскер те шăнтаймасть ĕнтĕ. Аллăмсем винтовкăна хытă чăмăртаççĕ.

„Дружок“ часах калле çаврăнса çитрĕ. Вăл ман çине пĕрре сиксе илчĕ те хăй хыççăн васкама чĕннĕ пекех туйăнчĕ. Айакран çаврăнса кĕрсе лутра чăрăшлăхра чарăнтăмăр. Епĕ „Дружок“ йăпшăнса пынине кура, йăвăççен хушшипе пĕшкĕнсе чĕрне вĕççĕн утма тытăнтăм... „Дружок“ чарăнчĕ. Вăл ахальрен чарăнмасть. Пĕрре ун çине пăхса илетĕп, тепре чăрăш тураттисен хушшипе пуçа чиксе пăхатăп. Тарăху çакăн пек кирлĕ мар вăхăтра пулать те—чăтма çук ӳсĕрес килсе кайрĕ. Сывламашкăн та сыхланмала. Сывлăша аран çавăрса илтĕм. Халĕ кăштах чăтатăп ĕнтĕ. Каллех „Дружок“ çине пăхса илтĕм. Выртрăм йур çине. Тункатасемпе йăвăççем курăнаççĕ. Урăх нимĕн те палăрсах каймасть.

Мĕншĕн мана чарса тăрать „Дружок“ çак вырăнта, тен каçма çуктăр, çул шырамала пулĕ тен? Выртса тинкерсе пăхатăп. Умри тунката çинче йур кӳмеркки хăпартса хунă пек курăнать. Ак, шурă мĕлке вырăнĕнчен çĕкленчĕ. Акă, курăр ăна, вăл ман умри чăрăш турачĕсене сирсе, ман çинелех килет. Ман çинелех кĕрет.

— Чарăн, çĕкле аллуна!—тесе хыттăн кăшкăрса йатăм. Ман сасă çĕрлехи вăрманти йăвăççем çине çапăна-çапăна таçтанах йантраса кайрĕ. Епĕ халь тен халь персе йама хатĕр...

Ман умри шур тумтирлĕ çыннăн шурă аллисем çӳлелле çĕкленчĕç.

Мĕскер туйрĕ çак самантра ман чĕре, мĕнле хаваслă вăйхăватсĕклерĕ! Ман сасса илтнĕ кӳршĕри пограничниксенчен пĕри часах пирĕн пата чупса çитрĕ.

Чĕнмен „хăнана“ сăмах чĕнтермерĕмĕр. Епĕ увăн аллисене хыçалала çавăрса сыхрăм. Ăна хамăр умран утма хушрăм.

Васкарăмăр епĕр, ăшша пиççе çитрĕмĕр. Çăра туратсем витĕр тухса кĕртсем урлă каçрăмăр.

Çутăлса çитрĕ. Заставă умĕнче пире хирĕç хамăр лейтенант тухрĕ.

— Лейтенант йулташ!—терĕм ăна. Епĕ ăна ытарайми лайăх каç çинчен, „Дружок“ йепле ăсли çинчен, тăшман йепле чейи çинчен каласа парасшăнччĕ. Анчах, урăх пĕр сăмах та калаймарăм. Тайкалансах крыльца патне çитрĕм те, шурă тумтирлĕ çын çине пӳрнепе кăтартса:

— Акă вăл!—тесе йатăм.

Ларас темен çĕртенех пусма çине тайăнса лартăм. „Дружок“ ман ура вĕçне пырса выртнă.

Хĕвеланăç чикки, 1938 ç.

Ҫӗрулми хатӗрлевӗ

Государствӑна хирӗҫле туртӑмсене ҫапса хуҫмалла

Нойабӗрӗн 25-мӗшне республикӑ ҫӗрулми хатӗрлев планне 64,1 процент, Мускава ҫӗрулми ӑамалли плана 76,8 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫӗрулми хатӗрлев планне тултарас ӗҫре уйрӑмӑнах Вӑрмар, Кувакина, Хӗрлӗ Чутай районӗсем кайа йулнӑ.

Республикӑра ҫӗрулми хатӗрлевӗ ҫапла начар пыни вӑл районсенчи хатӗрлев организацисем, районсенчи партипе совет органӗсем ку тӗлӗшпе большевикла ӗҫлеменнинчен килнӗ. Сӑмахран, Турхан районӗнчи руководительсем плана хӑвӑртрах тултарас чухне ҫӗрулми вырӑнне государствӑна пама шутланӑ.

Чылай ҫӗрте государства умӗнчи обйазательствӑсене йалти активиссем хӑйсем те тултармаҫҫӗ. Акӑ, Куславкка районӗнчи Тӗрлемесре йалсовет членӗсем, йалсовет председателӗ Охримӑв йулташ хӑй те государства умӗнчи обйазательствӑсене тултармаҫҫӗ. Пӑллӑх, йалсенчи активиссем хӑйсем государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тӳрӗх тултармасӑр пулсан, ӑстан вӗсем массӑна мобилизацилеме пултарччӑр! Активиссен пур ӗҫре те массӑна ыра пример кӑтартса пымалла.

Хӗшпӗр ҫӗрте районри руководительсем хӑйсем государствӑна хирӗҫле ҫул ҫине тӑни те пур. Ҫентабӗрӗн 10-мӗшӗнче Канаш райӗҫтӑвкомӗ ҫӗрулми хатӗрлевӗн район планне 127 тонна чакарма йышӑннӑ. Канаш райӗҫтӑвкомех августӑн 9-мӗшӗнче „Ударник" колхозри колхозниксен хуҫалӑхӗсене ҫӗрулми лартма панӑ плана 18 гектартан 10,33 гектар чакарса хӑварнӑ. Кунпа пӗрлех государствӑна ҫӗрулми тӑратма панӑ обйазательствӑна та чакарнӑ. Ҫавӑн пекех, Йелчӗк райӗҫтӑвкомӗ президиумӗ нойабӗрӗн 4-мӗшӗнче Сталин йачӗпе тӑракан колхоза государствӑна ҫӗрулми тӑратма панӑ обйазательства вырӑнне тӗштыра тӑратмалла йышӑннӑ. Турхан райӗҫтӑвком президиумӗ Ворошилӑв тата Калинин йачӗпе тӑракан колхозсене тата „Смычка" колхоза ҫӗрулми хатӗрлев обйазательствине тултарма отсрочка парасси ҫинчен ыйтма йышӑннӑ.

Ҫакнашкал государствӑна хирӗҫле решенисем вӗсем пурте ҫӗрулми хатӗрлев планне вӑхӑтра тултарма чӑрмав кӳрсе пынӑ.

Йӗпреҫ райӗҫтӑвкомӗ ҫӗрулми хатӗрлевӗпе ӗҫлеме район центрӗнче „тройка" организациленӗ хыҫҫӑн, райӗҫтӑвкомпа парти райкомӗ ку тӗлӗшпе ӗҫлеме пачах пӑрахнӑ пулнӑ.

Ҫӗрулми хатӗрлев ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерсе пырса, ҫӗрулми хатӗрлев планне кашни район, кашни колхоз тата йалти кӗске вӑхӑтра тултарас пулать. Ку ӗҫре чӑрмантаракансемпе хаййулан кӗрешмелле.

Андрийанӑв.

Хроникӑ

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ С. А. Степанӑв йулташа ССРС Машиностройени Халӑх Комиссарӗн заместительӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

(ТАСС).

ПЕРЕПИҪ УМӖН

Хатӗрленӳ ӗҫӗ сарӑлса пырать

Республикӑра Пӗтӗм Союзри халӑх перепиҫне хатӗрленес ӗҫ сарӑлса пырать. Халӑх хуҫалӑх учечӗн районри тата участӑксенчи инспекторӗсене, вӗсен помощникӗсене, перепиҫ уйрӑмӗсен заведуйушчисене 148 ҫынна тата перепиҫ уйрӑмӗн заведуйушчийӗсен помошникӗсене 79 ҫынна курссенчен вӗрентсе кӑларнӑ.

Декабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пур районсенче те инструктӑр-контролӗрсене вӗрентме тытӑнаҫҫӗ. Кун хыҫҫӑн счотчиксене вӗрентес ӗҫ пуҫланать. Республикӗре илсен инструктӑр-контролӗрсене 624 ҫын, счотчиксене 2589 ҫын пӑхса тухса ҫирӗплетнӗ. Пӗтӗм Союзри Халӑх-Хуҫалӑх Учечӗн Управленийӗ перепиҫе кирлӗ кадрсене хатӗрлеме 70 пин тенкӗ укҫа уйӑрса панӑ. Ку укҫасене районсене йарса параҫҫӗ.

Перепиҫ ӗҫне тӗплӗн вӗренес майпа Чӑваш АССР Халӑх-Хуҫалӑх Учечӗн Управленийӗ ҫумӗнче икӗ кружок организациленӗ. Вӗсенче 42 ҫын тӑрать. Кружоксенче перепиҫ иртнӗ хыҫҫӑн килекен материалсене йышӑнма тата шутласа тухма вӗренеҫҫӗ.

Пур районсене те (перепиҫ иртнӗ справкӑна контроль бланкисӗр пуҫне) перепиҫ иртермелли документсене пӗтӗмпех йарса панӑ.

Халӗ йалсенче хуҫалӑх кӗнекисене, хуласенче ҫурт кӗнекисене тӗрӗслес ӗҫ пырать.

Ҫавах та хӑшпӗр районсенче перепиҫе ҫителӗксӗр хатӗрленнине палӑртмалла. Массӑлӑ-ӑнлантаруллӑ ӗҫ кирлӗ вырӑнта тӑмасть. ССР Союзӗ Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн постановленийӗ тӑрӑх нойабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пур районсенче те районри инспекторсен помощникӗсем пулма уйӑрнӑ работниксене 3 уйӑх ҫулталӑк хӑйсен тӗп ӗҫӗнчен хӑтарса, перепиҫе хатӗрленес ӗҫе куҫармалла пулнӑ. Анчах та халӗ 6 районра инспекторсен помощникӗсене хӑйсен йалан ӗҫлекен ӗҫӗрен хӑтарман. Куславкка районӗнче помошник пулса ӗҫлеме райплан председателӗне Белов йулташа уйӑрнӑ. Райӗҫтӑвком вӑна перепиҫе хатӗрленес ӗҫе куҫармасӑр тӑрать.

М-в.

Перепиҫе отличнӑ иртеретпӗр

ТУРХАН. Йӳҫ Шӑхаль йалсоветӗнче халӑх перепиҫне иртерме ҫине тӑрсах хатӗрленеҫҫӗ. Комсомолец-агитаторсем халӑх перепиҫне мӗнле иртересси тата перепиҫ иртнӗ хыҫҫӑн пысӑк вырӑн йышӑни ҫинчен темиҫе хутчен те докладсемпе калаҫусем туса иртерчӗҫ.

Йалсоветӗнче перепиҫ кӗтесӗ организациленӗ. Унта хаҫатсем ҫинче перепиҫ ҫинчен ҫырнӑ статйасене касса илсе ҫыпӑҫтарса хунӑ. Кунсӑр пуҫне йалсоветӗнче перепиҫ ыйтӑвӗсене ҫутатса пулӑ стена хаҫачӗ кӑларать. Йалсовет ҫитес перепиҫе отличнӑ иртерме тӑрӑшать.

Й. Софронӑв.

Республикӑлӑ Испанире. ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: республикӑ ҫарӗн аманнӑ боецӗсем Валенси ҫывӑхӗнчи ҫӗнӗ госпитальре. Вӑл госпитальле пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем Испани халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулса пуҫтарнӑ укҫапа туса лартнӑ.

(Союзфото).

М. Г. Шевченко

Никама та ан ӑмсан

Ан ӑмсан пуйан ҫынна ес
Унпала пӗтетӗн,
Никама та хӗрхенмест вӑл,
Пусмӑглат пурне те.
Ан ӑмсан вӑйлӑ ҫынна ес,
Вӑл пӑхӑнтарасшӑн.
Ан ӑмсан чапри ҫынна та,
Ана мар вӗт ӑшшӑн
Пысӑк чыс парса саваҫҫӗ,
Йуратаҫҫӗ унӑн
Чапне ҫеҫ... Ана вӑл тупнӑ

Пиҫӗ тертлӗн, хурлӑн.
Каччӑна хӗр пӗрлешессӗн—
Райри пек хавасла.
Вӗсенче те хурлӑх курӑн,
Лайӑхрах пӑхсассӑн.
Ан ӑмсан ес никама та—
Еп аван пӗлетӗп:
Ҫӗр ҫинче ес рай тупаймӑн,
Ҫук вӑл тӳпере те.

1847 ҫ. Усли Васлейӗ куҫарнӑ.

Иван Ивник

Чапай

Лапка мар-ҫке Урал шывӗ,
Ахӑрать, йӗрет.
Урал шывӗ ҫийӗн харсӑр
Пулемет кӗрлет.

Хура хумлӑн, хӗрлӗ йунлӑн
Пӑтранать Урал.
Тӑшмансем ҫитсе ҫывхарчӗҫ,
Килчӗҫ хуп хура.

Тӑшмана йалан ҫӗнтерне,
Ҫӗмӗрнӗ Чапай.
Ҫартсем урал, хирсем урлӑ
Тухнӑ вӑл чаппа.

Казаксем-и ҫывхараҫҫӗ,
Йе килет Колчак,—

Чапайа йалан та паллӑ
Ҫӗнтерӳ анчах.

Колчака вӑл хуса йанӑ,
Ирекре—Урал.
Анчах вилчӗ пирӗн паттӑр,
Путрӗ авӑра.

Ҫитӗнет Совет ҫӗршывӗ,
Сӗклекет пӗрмай.
Ҫӗн тӗнчешӗн пуҫне хучӗ
Командир Чапай.

Хуларӑ хаҫ йурӑ, йурӑ,
Йурӑ—йалсенче.
Асанса йурлатпӑр епӗр
Паттӑрсем ҫинчен.

Йалӑн ҫӗнелнӗ сӑн-сӑпачӗ

Ачакасси йалӗнче (Танай р.) колхоз организациленӗренпе 19 колхозник ҫӗнӗ пӳрт лартнӑ. Йулашки ик-виҫ ҫул хушшинче 20 колхозник велосипедсем, 39 колхозник ҫӗнӗ ҫӗлекен машинӑсем туйанчӗҫ. 7 колхозникӗн патефонсем пур. Йалта сехетсӗр кил ҫук та.

Хут пӗлмен ҫынсен шучӗ чаксах пырать. Йалта ҫӗнӗ интеллигенци ӳссе ҫитӗнчӗ. Колхозниксенчен 15 ҫын вӗтӗм шкулсенчен, 6 ҫын аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухнӑ. Вӗсем пурте ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеҫҫӗ.

Колхозӑ пурнӑҫ йала ҫӗнӗ сӑнсӑпат кӳчӗ. Йала хаҫат-журнал нумай килсе тӑраҫҫӗ. Колхозниксем ӗҫрен пушӑ вӑхӑтсенче клуба ҫӳреҫҫӗ, киносемпе спектакльсем кураҫҫӗ.

Разномазӑн.

Техникумри пулӑшу касси

Сӗнтӗрвӑррринчи мелиорацине ҫирӗплетекен техникумӗнче студентсене вӑхӑтлӑха кивҫен укҫа паракан пулӑшу касси организациленӗ. Кассӑра малтанхи вӑхӑтра пӗтӗмпе те 140 тенкӗ ҫеҫ пулнӑ. Халӗ унта 675 тенкӗ шутланать. Членсен йышӗ 90 ҫынна ҫитнӗ. Касса хӑйӑн членӗсене кирек хӑш вӑхӑтра та кивҫен укҫа парать.

Н. Павлӑв.

Суту-илӳ ӗҫне йӗркелемеле

СӖНТӖРВӐРРИ. Нойабӗрӗн 20-мӗшӗнче йалпо председателӗсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура государствӑна тырпул сутас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен йалпо председателӗсен тата районри суту-илӳ организацисен ӗҫӗсем ҫинчен районри суту-илӳ пайӗн пуҫлӑхӗн Сидарӑв йулташӑн докладӗсене итлерӗҫ. Ҫак ыйтусене сутсе-йавнӑ хыҫҫӑн потребкооперацине ҫитсемнисе ҫитменлӗхсем пулса пыни чылайах палӑрчӗ.

Райӗнпе илсен государствӑна тырпул сутасси пачах та ҫителӗксӗр пырать. Сӑмахран, Турханкасси йалпо председателӗ Галкин йулташ правлени членӗсемпе куҫ ыйтӑва питех те кайа йулса сӳтсе-йавнӑ. Колхоз правленисемпе договӑр тӑвасси те ҫителӗксӗр пырать. Нойабӗрӗн 20-мӗш тӗлне вӑл 2 колхоз правленипе ҫеҫ договӑр тунӑ. Колхозниксем государствӑна тыра сутсан мӗнле таварсем илме заказ пани ҫинчен Галкин йулташран ыйтсан, вӑл нимӗнле ответ та параймарӗ.

Хӗшпӗр йалпосем 4-мӗш кварталти таварҫавӑрнӑшӗн планне тултарас ӗҫре кайа йулса пыраҫҫӗ. Акӑ, Кӗчкейри йалпо (председателӗ Агатейӗв) плана 45,6 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Тата хӑшпӗр йалсенче тавар сутнӑ хыҫҫӑн илнӗ укҫана государства банкне вӑхӑтра леҫсе памаҫҫӗ. Ӗсмӗл йалпо председателӗ Кӑвзев йулташ тавар сутса илнӗ 25 пин тенкӗ укҫана банка леҫмесӗр 6 кун тытса вырнӑ. Кун пек ҫитменлӗхсене татах та нумай палӑртрӗҫ.

Районри суту-илӳ пайӗ (унӑн пуҫлӑхӗ Ҫидарӑв йулташ) суту-илӳ ӗҫне йӗркелессишӗн ҫителӗклӗ ӗҫлемест, ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн тӑршшӗн кураймасть. Суту-илӳ организацисен мӗнле ӗҫлесе пынине сводкӑсемпе сведенисем тӑрӑх ҫеҫ пӗлет. Вырӑнсене тухса ӗҫе тӗрӗслемест.

Ӗҫсӗнисене кулӑсем кирлӗ таварсене кӳрсе килес ӗҫ районра питех те начар тӑрать. Ҫидарӑва—хулари магазинсенче йе йалпо магазинсенче мӗншӗн сахӑр, пируҫ йе тата ытти куллен кирлӗ таварсем ҫителӗксӗр йе пачах ҫук, тесе ыйту парсан, вӑл ана хирӗҫ нимӗнле ответ та параймарӗ.

Суту-илӳ ӗҫӗнче пулса пыракан ҫитменлӗхсене ӗҫҫыннисем хӑвӑртрах пӗтерме ыйтаҫҫӗ. Ку ҫитменлӗхсене пӗтерме районри суту-илӳ пайӗн хӑйӗн ӗҫне тӗрӗслех урӑхлатса ҫӗнетмеле.

В. Иялӗв.

Учительсене аттестаци парса пӗтернӗ

Республикӑра учительсене аттестаци парас ӗҫ пӗтнӗ. Ку тӗлӗшпе районсенче виҫӗ бригада ӗҫленӗ.

Аттестаци комиҫҫийӗ урлӑ пурӗ 6131 учитель тухнӑ. Вӑл шутран пуҫламӑш шкул учителӗн йатне 1502 ҫынна, тулли мар вӗтӗм шкул учителӗ йатне 532 ҫынна, вӗтӗм шкул учителӗн йатне 778 ҫынна панӑ.

Кунсӑр пуҫне тата 684 ҫынна педучилищӗ курсне, 1532 ҫынна учительсен институчӗн курсне тата 309 ҫынна пединститут курсне пӗтерес обйазательствӑпа учительсен ӗҫӗнче ӗҫлеме ирӗк панӑ.

В. Порфирйӗв.

Выҫҫав укҫи тӳлесҫӗ

Нойабӗрӗн 26 — 28-мӗшӗсе Шупашкарти перекет кассис Иккӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (тӑв мӗш ҫулхи кӑларӑм) За 9-мӗш тираж таблици тӑрӑх тенкӗ те 50 пус выҫӑв укс леҫӗ. Ку шутран Тӗп кассинче 9080 тенкӗ, ҫыхӑн мӗнче—3798 тенкӗ, симӗс та 400 тенкӗ, гостиниц тенкӗ те 50 пус.

Ҫаксенчен 500 тенкӗлӗх пӗр о лигаципе 1100 тенкӗ, ҫӗршер те кӗлӗх 5 облигаципе 200 тенк укҫа тӳленӗ.

Тӗп перекет кассинче выҫӑ илекенсенчен чылайӑшӗсем выҫ укҫине ҫав вӑхӑтрах перекет ка сине хураҫҫӗ тата халӑх-пурнӑ Государствӑн 1938 ҫулхи шал займне илеҫҫӗ.

Кӗскен

Шупашкар районӗнчи „Ку ме тӗрӗ" ертелӗнче драмкруж тата шӑвӑл оркестр организац ленӗ. Вӗсем сывӑхри йалсене к са темиҫе выступлени те т ӗнтӗ.

Г. Тимофейӗ

Ҫӗрпӳри йалхуҫалӑх техн кумӗнче кашни кунах 15—20 м нутла политинформацисем пул ҫӗ. Политинформацисене ком мол комитечӗ йӗртсе пырать.

А. Вороблов

Мӑн Чураш йалӗнче (Йӗтӗ не р.) нумай пулмасть пысӑк м газин уҫнӑ. Макзазин колхозни сене кирлӗ таварсем ҫител кӳрсе тӑрать.

И. Васильӗв.

Ҫак кунсенче Сӗнтӗрвӑрри чи колхоз театрӗ Ишлей рай нӗн центрӗнче икӗ куп хуш пуҫласа концерт пачӗ. Концер сене пурӗ 950 ҫын ытла итленӗ.

Ал. Смирнов

Ҫак кунсенче пичет раб никӗсен шашкӑ турнирӗ пул иртрӗ. Турнирта пурӗ 12 ҫын ларӗҫ. Пӗрремӗшпе иккӗм вырӑна 9 очко илсе Студенецк пе Стаҫуков („Красная Чувашия" 7 очко илсе виҫҫӗмӗш выр М. Карпӑв („Ҫамрӑк большевик тӑтаттӑмӗш вырӑна Меценат (Главлит) йулташсем йышӑнчӗҫ Малти вырӑна тухнисене парса премилерӗҫ.

Колхоза кӗреҫҫӗ

ТУРХАН. Ҫак кунсенче Ту Пӳртлӗри „Ударный" колхоза хуҫалӑх, „Красная Чувашия" к хоза 3 хуҫалӑх, Кӗҫӗн Чемен „Заря" колхоза 5 хуҫалӑх, А Арапуҫӗнчи „Красный луч" колх за 39 хуҫалӑх кӗчӗҫ.

И. Л

Парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫуртӗнче

ПСК(б)П Обкомӗн парти вӗр тӗвӗн тӗп ҫуртӗнче йалан, но берӗн 29-мӗшӗнче, „Коммунис нравственнӑҫ тата тӗн тема лекци пулать.

Лекци каҫхине 6 сехетре пуҫ ать. Пурте ирӗклӗвех кӗме п тараҫҫӗ.

Парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫурчӗ

Ответлӑ редактӑр Н. М. ҪЕМЕН.

„Седов" тата „Фрам"

Арктикӑ пӑрӗсем хушшинче куҫса ҫӳрекен совет пӑрҫӗмрен пӑрахучӗ „Седов" нойабӗрӗн 7-мӗшӗнче ҫурҫӗр широтин 85 параллелӗнчен иртнӗ. Пӗр ерне те иртмерӗ, карап полюс патне татах ҫур градус ҫывхарчӗ.

Капитан-комсомолец К. С. Бадигин йӗртсе пыракан вунпилӗк чаплӑ моряк-поларникӗсем етем пурӑнакан чи ҫурҫӗрти пункт шутланакан „Седов" ҫинчи ҫынсем пулса тӑраҫҫӗ. Совет ҫӗршывӗн йалавӗ кӑҫал та полюс районӗнче вӗлкӗшет. Иртнӗ ҫулта папанинӗсен куҫса ҫӳрекен пӑрӗ ҫинчи хӗрлӗ йалав поларти хӑватлӑ йухӑмпа кӑнтӑр йеннелле пынӑ пулсан, халӗ „Седов" мачти ҫинчи йалав тӗпӗр йеннелле кайӑ паранма карап кашни кун полюс патнелле ҫывхарса тӳрӗ ҫурҫӗрелле куҫса пырать.

Папанинӗсен пӑрне кӑнтӑрала илсе кайнӑ йухӑм халӗ „Седова" ҫурҫӗрелле илсе пырать. Ҫак йухӑмпах хӗрӗх ҫул ытла ӗлӗкрех паллӑ полар тӗпчевӗҫи Фрийтоф Нансен усӑ курнӑ. Вӑл полар бассейнинчи йухӑмсем ҫинчен ыйтӑвне тӗпчесе, Хӗвелтухӑҫ-Гренланди йухӑмӗ (иртнӗ ҫул папанинӗсене полюсран Гренланди ҫыранӗсем патне илсе пынӑ йухӑм) полюс витӗрех йе ун патӗнчен ҫывӑхран иртме пултаракан хӑватлӑ полар йухӑмӗн вӗҫӗ ҫеҫ пулса тӑрать пулӗ, тесе шутланӑ. Ҫав йухӑм Ҫӗпӗрӗн хӗвелтухӑҫри ҫыранӗсенче, Беринг проливӗн районӗнче пуҫланнине, хӗвелтухӑҫӗнеле кӑшт ҫурҫӗрелле Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ океан урлӑ каҫса кайнине Нансен ҫирӗп ӗненсе тӑнӑ.

Ҫакӑн пек ӗненни акӑ мӗнрен килнӗ. 1884 ҫулти йӗнӑҫ уйӑхӗнче Гренландин кӑнтӑр вӗҫӗнчи пӑр ҫинче Ден—Лонгӑн тинӗсре путнӑ „Жаннета" карапӗ ҫинчи тӗрлӗ йапаласем 58 тупнӑ. Ку йапаласене пӑр ҫине карап екипажӗ 1881 ҫулта Новосибирск утравӗсенчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫӗнеле ҫурҫӗр широтин 77 градусӗ те 15 минутинче хӑварнӑ. Хӑватлӑ полар йухӑмӗ ҫеҫ вӗсене пӗтӗм Полар бассейни урлӑ илсе кайса, виҫӗ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн Атлантикӑ океанне Гренландин кӑнтӑр вӗҫне илсе тухма пултарнӑ.

Нансен ҫав йухӑмпа Ҫурҫӗр полюсне ҫитме усӑ курма шутланӑ. Ҫав тӗллевпе вӑл „Фрам" карап тунӑ. Вӑл карапӑн шыв айӗнчи пайне пӑрсем хӗссен карапа ҫӳлелле кӑлармала тунӑ. Ҫак карап ҫинче Нансен, Ази ҫыранӗсем тӑрӑх кайса, Новосибирск утравӗсенчен ҫурҫӗрелле 1893 ҫулта ҫентабӗрӗн 20-мӗшӗнче пӑрсем хушшине кӗнӗ. „Фрам" часах пӑр ҫине тухса выртнӑ, мӗншӗн тесен ана пӑрсем хӗссе ҫӳлеле кӑларнӑ. Нансен карапа ҫаплипех хӑварнӑ.

Нансен шухӑшлани пит те чӑн пулнӑ: „Фрама" виҫӗ ҫул хушши куҫса ҫӳренӗ хушӑра тинӗс йухххи ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫӗнеле илсе кайнӑ, унтан кӑшт кӑна кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнеле Шпицберген районне илсе кайнӑ. Кунта вӑл 1896 ҫулта август уйӑхӗнче пӑрсене сиктерсе пӑрсем хушшинчен хӑтӑлнӑ та таса шыв ҫине тухнӑ.

Чи пысӑк широтана „Фрам" хӑй куҫса ҫӳреме пуҫласан иккӗмӗш ҫулӗнче хӗвелтухӑҫ долготин 66 градусӗнче ҫитнӗ; 1895 ҫулти октябӗр уйӑхӗнче карап ҫурҫӗр широтин 85 градусӗ те 57 минутине ҫитнӗ.

„Фрама" полюс патне тата ытларах ҫывхарма май килмен, мӗншӗн тесен вӑл пысӑках мар широтара куҫса ҫӳреме тытӑннӑ. Ҫапла шутлама пулать: „Фрама" пӑрсем хушшине кӑштах ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерех тухма май пулнӑ пулсан вӑл, йухӑм ӑна тата пысӑк широтасем патне илсе пынӑ пулӗччӗ. „Фрама" Пӑрлӑ океанӑн сарлака талккӑшӗсем урлӑ илсе кайнӑ йухӑм полюс районӗ урлӑ каҫнине иртнӗ ҫул папанинӗсен пӑрӗ куҫса ҫӳрени те ҫирӗплетсе панӑ. Вӑл йухӑмӑн хӗвелӑнӑҫ йенчи вӗҫӗ пӑра полюсран Гренландин тинӗсне илсе пынӑ, кунпа Нансен гениллӗ шухӑшӗ татӑклӑнах ҫирӗпленнӗ.

Ҫавӑнпа та, иртнӗ ҫулти октябӗр уйӑхӗн вӗҫӗнче совет ледокол пӑрҫӗмрене 1893 ҫулта „Фрам" куҫса ҫӳренӗ районах пӑрсем хӗссе ларсан, вӗсем Нансен карапӗн ҫулӗпех кайаҫҫӗ, тесе шутламала пулнӑ. Анчах та „Седов" куҫса ҫӳресси кӑшт урӑхларах пулса тӑчӗ.

Совет карапӗсем „Фрамран" виҫӗ градус ытларах кӑнтӑрарах, материк ӑшӑхӗ текен ҫӗрте, тарӑнах мар вырӑнтан куҫма пуҫланӑ, унта хӗвелтухӑҫӗнчен хӗвеланӑҫнеле кайакан тӗп полар йухӑмӗ ҫитеймест пулмала.

Вырӑнти, йухӑм ҫавӑрса илнӗ „Седов" тепӗр икӗ карапна пӗрле ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле куҫма пуҫланӑ, ӑна Лаптевсен тинӗсӗнчен Ҫурҫӗрти Пӑрлӑ океана широтин 78 градусне илсе пынӑ, ку вырӑн вӑл „Фрам" пӑрсем хушшинче татӑкланӑ шанса ларнӑ вырӑнтан 20 градус хӗвелтухӑҫнерех. Ҫакна паллӑ тума кирлӗ: „Фрам" та малтанхи вӑхӑтра ҫавнашкалах хӗвелтухӑҫнелле куҫса пынӑ, анчах „Седовран" нумай сахалтарах.

Материк ӑшӑхӗнчен океан тарӑнӑхне тухсан, „Седова" „Фрама" хӗвелтухӑҫнеле илсе кайнӑ хӑватлӑ йухӑмах ҫавӑрса илнӗ пулмала. „Седов" хӑйӗн ҫулне паӑрмалла улӑштарса ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле, хӗрӗх ҫул ытларах ӗлӗк „Фрам" кайнӑ ҫулпа параллельнӑ пекех куҫма пуҫланӑ.

„Седов" хӑй куҫма пуҫласан ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле кайнине пула, виҫӗ градус кӑнтӑрарахра куҫма пуҫланӑ пулин те, полӑрӑн тӗп йухӑмне „Фрамран" чылай ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерех лекнӗ. Ҫак йухӑм малалла „Фрам" ҫулӗпе параллельнӑ куҫса пырса „Седов" тивӗҫлӗ долготана „Фрамран" икӗ градуса йӑхӑн ҫурҫӗререх пырать. Ку вӑл пире „Седов" малашне те ҫав „форманӑх" тытса пырать, тесе шухӑшлама май парать, тен, йеринен полюс патне ҫывхарса, ӑна пысӑклатать те.

Халӗ ӗнтӗ „Седова" „Фрам" ҫитнӗ рекордлӑ широтаран ҫур градус та ҫук уйӑрса тӑрать. Анчах ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерех куҫса пыракан „Седов" хаҫ пыракан вырӑнтан „Фрам" вӑл широтана чылай хӗвелтухӑҫнерех ҫитнӗ. Ҫавӑнпа та ытларах пысӑк широтасене ҫитесси „Седовшӑн" малта тӑраҫҫӗ, тесе шутлама пулать.

Ҫак карап куҫса ҫӳренин аслӑлӑхлӑ пӗлтерӗшӗ калама ҫук пысӑк. „Седов" нахӑҫан та пӗр карап та, пӗр ҫын та та пулман Полар бассейнӗн районӗсенче. „Седовӑн" аслӑлӑх ӗҫӗсене тума чаплӑ хатӗрсем илнӗ, сталинла тӑрӑшнипе хавхаланнӑ, тӑван ҫӗршыв йуратакан хаййулӑ екипажӗ аслӑлӑх работникӗсене чи тухӑҫлӑ ӗҫлеме пит те лайӑх условисем туса панӑ. Магнитлӑ, метеорологилӗ тата ытти тӗрлӗ сӑнавсене тӑтӑшах туса пыни, хӑвӑртлӑха тата ӑстала куҫнине виҫни, куллен тӑватӑ хут сӑнаса сводкӑсене туни, вӗсене радио тӑрӑх пӗрсе пыни — вӗсем пурте Арктика ҫантӑлӑкне тӗпчесе вӗренмелли хаклӑ вклад пулса тӑраҫҫӗ.

Инҫетри ҫурҫӗре куҫса ҫӳрекен хӑйӗн карапне пӗтӗм ҫӗршыв тимлӗн сӑнаса тӑрать. Совет ҫӗршывӗ „Седовӑн" паттӑр екипажне пулӑшма пур вӑхӑтра та хатӗр. „Седов" ҫыннисен хӑйсен ӗҫне лӑпкӑн та шанчӑклӑн малала туса пыма пултараҫҫӗ. Пултарулӑ полар никсемӗн пирӗн правительство, парти тата Сталин йулташ тӑрӑшнин седовӗсене полар фронтӗнче Совет ҫыннисен тата тепӗр ҫӗнӗ ҫӗнтерӳне тума май парать.

М. Райхенберг.

ЧӐВАШСЕН ЙАЛХУҪАЛӐХӖН КОММУНИСЛА АСЛӐ ШКУЛНЕ

ЛАБОРАНТСЕМ, АСЛӐ ПРЕПАРАТАРСЕМ ТАТА КОМЕНДАНТ КИРЛӖ.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 3.

Ректорат

ССР Союзӗн Сталинла Аслӑ Конституцине йышӑнни икӗ ҫул тултарнӑ тӗле—декабӗрӗн 5-мӗш тӗлне „Союзкинопрокатӑн" Чӑваш уйрӑмӗ Чӑваш республикӗнчи екрансем ҫине

СОВЕТСЕН ПӖТӖМ СОЙУЗРИ ЧРЕЗВЫЧАЙЛӐ VIII-мӖШ СЪЕЗДӖ ҪИНЧЕ И. В. СТАЛИН ЙУЛТАШ ССРС КОНСТИТУЦИ ПРОЙЕКЧӖ ҪИНЧЕН ТУНӐ ДОКЛАД"

йатлӑ историлӗ фильм кӑларать.

„Союзкинопрокатӑн"

Чӑваш уйрӑмне кассирсем йалавлӑ ӗҫлеме вырӑсла-чӑвашла шрифт пичетлеме пӗлекен пысӑк квалификациллӗ

МАШИНИСТКӐ КИРЛӖ.

Тӳлесси—ӗҫленӗ тӑрӑх пулать.

Ыйтса пӗлмели адрес: ул. Ленина, № 13, телефон 3—95.

Союззаготплодоовощчӑн

Шупашкарти межрайоннӑй кантурӗ Свелов урамӗнчи 27-мӗш номерлӗ ҫуртпа Кирӑвски посолӑка, Гражданская урам

2-мӗш номерлӗ ҫурта куҫ

Союззаготплодоовощ

Уполномоченный Чувашглавлита № 574. Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 838, т. 6, 5[illegible] н. н.